Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУНЬ 8 ЙУНКУН
129 (4942) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. *ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ*. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Суйлава çĕнĕ çĕнтерÿсемпе кĕтсе илер

Пĕтĕм çĕршыв суйлава хатĕрленет. Пĕтĕм Совет халăхĕ социализăм строительствин пур участкисенче те ийунĕн 26-мĕшне—Верховнăй Советсен суйлав кунне пысăк çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленет. Савăнăçлă, телейлĕ пурнăçан Сталинла Конституцийĕ, ăна пурнăçа кĕртсе пыни, иртнĕ суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерни, контрреволюцилĕ сыхтăмла-троцкисла блока çĕмĕрсе тăкни—çаксем пурте вĕсем халăх хушшинчи пултарулăха çĕклентереççĕ, рабочисене, колхозниксене, пĕтĕм ĕçхалăхне çĕнĕ çĕнтерÿсем тума хавхалантараççĕ.

Канашри вакунсем йусакан саватри рабочисем, инженерла-техникла работниксем, служащисем Сталин йулташ патне, вăл Канаш суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшÿ панипе хавхаланса йанă телеграммăра производства планне срукчен тултарма пулаççĕ.

Рабочисемпе колхозниксем хушшинче производствăлă çĕкленÿ вăйланса пыни çинчен Канаш—Шупашкар чукунçул строителĕсем ийунĕн 4-мĕшĕнче рельсăсем хывса пĕтерни те лайăх каласа парать. Çак кун строительствăра пуçласа 2,7 километр тăршĕ рельсă хывнă. Çакăн пек пысăк рекорд пани вĕсен ĕçĕнче ку таранчен пулман. Халĕ строителсем августăн 1-мĕшне чукунçула пĕтĕмпех туса çитерсе хута йамала тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май колхозсенче, бригадăсенче, социализăмла ăмăрту вăйланса пырать. Вăйлă тырпулшăн 3 республикă: Чăваш, Тутар, Мордва республикĕсем хушшинче пыракан ăмăрту ытларах та ытларах колхозниксен ăстăнне вырнаçать, вĕсем республикăна çав ăмăртура малти вырăна кăлармала тăвассишĕн пĕтĕм вăйхăватне хурса кĕрешеççĕ. Хĕрлĕ Чутайпа Çĕмĕрле районĕнчи колхоз председателĕсемпе йалхуçалăх специалисĕсен сăмахĕ: 1938 çулти тырпула кĕске вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕме, государствăна малтанхи авăнран пысăк пахалăхлă тырă памала тăвассишĕн кĕрешме йышăннă. „Çĕршыва ытларах сĕт-çу, аш-какай, çăм парар“,—теççĕ вĕсем. Çĕрпÿ районĕнчи Енешхĕрринчи „Балтиец“ колхоз, вăйлă тырпулшăн ăста кĕрешнипе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине тăма тивĕçлĕ пулчĕ. Çак колхоз пуçланни РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Советсен суйлав кунĕнче—ийунĕн 26-мĕшĕнче 6 çул тултарать. Çак икĕ паллă кун пĕр вăхăтра килсе тухни колхозниксене вĕçĕмсĕр хĕпĕртетерет. Вĕсем çак куна пур йенчен те çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме социализăмлă ăмăртăва вăйлатса йанипе хатĕрленеççĕ. Кăçалхи çуракине Çĕрпÿ районĕнчи пур колхозсенчен малтан тата пысăк хаваслăхпа ирттернĕ. Ирхи çĕртме туса пĕтернĕ. Клевĕрпа вăрлăхлăх акнă вырăнсенче çумкуракĕсене пĕрремĕш хут çумласа тухнă. Халĕ колхоз тырпулсене кĕске вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пуçтарса кĕме хатĕрленет.

Республикăри пур колхозсенче те çакăн пек хĕрÿлĕ ĕçсем пыраççĕ.

Производствăлă çĕкленÿ сутуилу пек кайа йулнă участкăсенче те вăйланса пырать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Есмĕл йалповĕн пайщикĕсем Верховнăй Советсен суйлав кунĕ тĕлне йалпо ĕçне пур йенчен те лайăхлатса йама йышăннă, ийунĕн 20-мĕшне столовăй уçма хатĕрленеççĕ.

Ийулĕн 1-мĕшĕнче партин облаçри конференцийĕ уçăлмала. Партипе совет, хуçалăх, комсомол, профсойуз организацисен руководителĕсен задачĕ вăл—массăн политикăлă тата производствăлă хастарлăхĕн пуçне тăрса, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунне, çавăн пекех тата партин облаçри конференцине социализăм строительствин пур участкисенче те пысăк çĕнтерÿсемпе çитмеле тăвасси пулать. Çавăн пек тăвас тесен, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене хальхинчен темиçе хут ытларах çине тăрса пĕтерсе пымала, троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла шпионсене, диверсантсене, пуçкасансене тĕпĕ йĕрĕпе пĕтермеле. Парти, совет, хуçалăх ĕçне çĕнĕрен лартнă кадрсене большевикăмпа хĕçпăшаллантармала. Партире тăракан тата партире тăман большевиксене малашне те хайулăн ĕçе лартса пымала. Стахановцăсен ĕçĕнчи лайăх опытсене кайа йулакан участкăсене куçармала.

Пайанхи куна пирĕн ĕçсем çителĕклĕ, кирлĕ пек пулса пыраççĕ теме пултараймастпăр-ха. Промышленнăç предприйатисем çапла промфинплана тултарса пымаççĕ. Канашри вакунсем йусакан саватмай планне пурĕ те 72,3 процент анчах тултарнă. Вăрманпром ийунĕн 1-мĕшне 5 уйăх планне: хатĕрлес йенĕпе 22,2 процент, туртарса кăларас йенĕпе 18,4 процент анчах тултарнă. Коммуналлă çурт-йĕр тата çĕнĕ саватсем тăвас ĕç те пайан куна начар пырать.

Çурхи тырăсене, пĕтĕмĕшпе илсен, акса пĕтересси патне çитнĕ пулсан (ийунĕн 1-не 98,3 проц.), уйрăм районсенче çак ĕç питех те кайа йулнă (Шăмăршă—84,6 проц., Парачкав—85,8 проц.), уйрамах—махоркă акасси кайа йулнă, плана пурĕ те 30,4 проц. анчах тултарнă.

Пирĕн хамăран пĕтĕм ĕçе çапла организацилес пулать: республикăра кайа йулакан предприйати, кайа йулакан колхоз, начар ĕçлекен учреждени пулмала мар. Социализăмлă ăмăртупа стахановла йухăма тата вăйларах сарса, пĕтĕм ĕçре татăклă улшăну тумала, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене промышленнăç, строительствă, йалхуçалăх йенĕпе, культурă строительствинче пысăк çĕнтерÿсем тунипе çитмеле.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен посолне Девис господина ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ Калинин йулташ йышăнна

Ийунĕн 5-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин йулташ Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен ССР Сойузĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне Джозеф Девис господина, вăл хăй ССР Сойузĕнчен кайас умĕн, йышăннă.

(ТАСС).

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен посолне Девис господина ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотăв йулташ йышăннă

Ийунĕн 5-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен ССР Сойузĕнчи посолĕ Девис господин хăй ССР Сойузĕнчен кайас умĕн ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Молотăв йулташ патĕнче пулнă.

Йышăнура Сталин та пулнă.

Калаçу икĕ сехет хушши пынă. (ТАСС).

Йапони интервенчĕсен пусмăрĕ айĕнче

Америкăра тухакан „ЭЙША“ йатлă журналта Шанхай хулине—Китайăн чи пысăк хулине, ăна йапонецсем тытса илнĕ, кăтартса çырнă статйа пичетленĕ.

„Шанхай,—тесе çырнă статйара,—нумайăх пулмасть Китайăн суту-илÿпе промышленнăç центрĕ пулнăскер халĕхи вăхăтра йăлтах пĕтсе ларнă. Йапони карапĕсем нумайăх пулмасть çав чи пысăк порт пулнă çĕре çарсемпе амуници çĕс туртарса пыраççĕ. Суту-илÿ нăрахучĕсем халĕ ĕнтĕ Шанхайа кĕрсе тухмаççĕ“.

Статйара çапла каласа çырнă: хулан хапрăксемпе саватсем йышлăн ларса тухнă районĕсене йапонцăсем пĕтĕмпех çĕмĕрсе пĕтернĕ. Вăрçă ĕçĕсем пынă вăхăтра çĕс мар, хулана тытса илнĕ хыççăн та, йапонецсем хулари çуртсене тата промышленнăç предприйатисене тискеррĕн çĕмĕрсе тăкма чарăнмаççĕ. Наньдао тытса илнĕ хыççăн (Шанхайри промышленнăçлă районсенчен пĕри), темиçе ерне хушши вут-кăвар çутти йăлкăшса тăнă. Хонкоу районĕнче йапонцăсем 900 хапрăка, саватсемпе вак предприйатисене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă.

(ТАСС).

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин IV-мĕш конференцийĕ хупăнчĕ

Ийунĕн 5—6-мĕш кунĕсенче конференци ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленум членĕсемпе кандидачĕсене, ревизи комиççи членĕсене тата Чăваш парторганизацин облаçри конференцине кайма делегатсем хуппăн сасăласа суйланă хыççăн хăйĕн ĕçне пĕтерчĕ. Конференци облаçри партконференцине ĕçтăвакан сасăпа 51 делегат, канашлакан сасăпа 9 делегат суйласа хăварчĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленум членĕсем

1) Никитин П. Н. 2) Иванов Г. И. 3) Дубăв И. В. 4) Ахазăв Т. А. 5) Лапин М. И. 6) Соколовă М. В. 7) Павлăв Н. П. 8) Андрейĕвă З. А. 9) Климентăв Г. Л. 10) Депутатов И. В. 11) Калинкинă П. И. 12) Краснов М. П. 13) Коротков С. К. 14) Полтев П. С. 15) Розанăв А. М. 16) Тараскинă А. Йа. 17) Романăвă М. М. 18) Игнатйĕв В. И. 19) Матвейĕв Ф. А. 20) Никифăрăв И. Н. 21) Харитонăв В. Т. 22) Петров И. П. 23) Круглов П. И. 24) Пегайĕвă М. П. 25) Маточкин И. С 26) Самсонăв А. Ф. 27) Соколов М. И.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленум членĕсен кандидачĕсем

1) Кольцов М. И. 2) Посыпкинă Йе. П. 3) Арзамасцĕв К. 4) Чиганайĕв А. В. 5) Семенăв А. С. 6) Рожайĕв П. И. 7) Шитов А. Н. 8) Золотников И. И. 9) Судаков А. Ф.

Ревизи комиççи членĕсем

1) Винокурăв Б. А. 2) Фомин П. Г. 3) Михайлăв П. М. 4) Бурков В. Г. 5) Йарков Ф. С.

ПСК(б)П. Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ

Ийунĕн 6-мĕшĕнче ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн пĕрремĕш çекретарне—Иванов Г. И. йулташа, иккĕмĕш çекретарне—Лапин М. И. йулташа, виççĕмĕш çекретарне—Романăвă М. М. йулташа, суйларĕ.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн бÿро членне çак йулташсене суйланă: 1) Иванов Г. И. 2) Лапин М. И. 3) Романăвă М. М. 4) Ахазăв Т. А. 5) Калинкинă П. И. 6) Харитонăв В. Т. 7) Андрейĕвă З. А.

ПСК(б)П Шупашкар хула комитечĕн бÿро членĕсен кандидачĕсене 1) Соколов М. М. 2) Соколовă М. В. йулташсене суйланă.

Украинă К(б)П Кийĕв Обкомĕн пленумĕ

КИЙĔВ, ийунĕн 6-мĕш. (ТАСС). Ийунĕн 6-мĕшĕнче Украина К(б)П Кийĕв облаç комитечĕн пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум Обком бÿровне тата унăн çекретарĕсене суйланă. Украинă К(б)П Кийĕв Обкомĕн пĕрремĕш çекретарне пурте пĕр шухăшлăн пулнипе Н. С. Хрущов йулташа суйланă, иккĕмĕш çекретарне Т. К. Черепин йулташа тата виççĕмĕш çекретарне—М. С. Спивак йулташа суйланă.

Совет Сойузĕ тăрăх

— Майăн 31-мĕшне колхозсем çĕртме сухи планне 44 процент тултарнă. Совет Сойузĕнче вăл куна мĕн пурĕ 12 мĕлйун та 974 пин гектар сухаланă. Плана Молдави АССР Республикĕ тата Донецк облаçĕ тултарнă.

— „Йермак“ пăрçĕмĕрен ийунĕн 4-мĕшĕнче пăрсем хушшинчĕн Тихайа бухтинче хĕл каçнă „Русанов“, „Пролетарий“ тата „Рошаль“ карапсене илсе тухнă. Вăл карапсем Архангельска кайаççĕ.

(ТАСС).

РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсем йачĕпе

Ийунĕн 6-мĕшĕнче столицăн мĕн пур паркĕсĕнчĕ РСФСР Верховнăй Совет суйлавесем йачĕпе массăлă гульванисем пулса иртнĕ.

Тимирйазĕв йачĕпе тăракан йалхуçалăх академин паркĕнче митинга тата гульанине Октаберски округри çамрăк суйлавçăсем пуханнă. Митингра сăмах тухса каланă çамрăк рабочи-стахановецсем, вĕренÿ ударникĕсем хăйсем хутшăнса пуна илемлĕ пурнăç çинчен каланă. РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Мускаври Октаберски суйлав округĕ тăрăх палăртнă кандидат—Мускав совечĕн председателĕ И. И. Çидăрăв йулташ уçăмлă сăмах тухса каланă.

Сокольнически парка çĕр пине йахăн суйлавçăсем пуханнă. Беседчиксем пропагандиссем тата агитатăрсем Сталинла Конституци çинчен каласа панă, „РСФСР Верховнăй Советне суйламали Положенипе“ паллаштарнă. Парк естрадинче концертсем пулнă.

А. М. Горький йачĕпе тăракан культурăпа кану паркĕнчи „Зеленый“ театрта Мускаври автотранспăрт предприйатисенче ĕçлекен рабочисен, инженерла-техникăла работниксен тата служащисен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пухура 15 пине йахăн çын пулнă. Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн прокуратурин прокурорĕ Реутский йулташ РСФСР Верховнăй Совет суйлавĕсем çинчен доклад туса панă.

Пухура Совет Сойузĕн Геройĕ Ляпидевский йулташ сăмах тухса каланă.

Пуху пысăк çĕкленÿпе Сталин тата Молотăв йулташсем патне саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

Суйлав кунне пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илетпĕр

Ийунĕн 26-мĕшĕ—РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун. Çак кун епĕр чи шанчăклă, Совет влаçне чĕререн парăннă çынсене Верховнăй Советсене суйлатпăр.

Ийунĕн 26-мĕшĕ пирĕн Енешхĕрринчи (Çĕрпÿ р.) „Балтиец“ колхоз членĕсемшĕн татах та паллă кун пулса тăрать. Çав кун пирĕн колхоза организацилени 6 çул тултарать. Чаплă куна епĕр пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешетпĕр.

Халĕ епĕр пур суйлавçăсене те суйлав Положенисене вĕрентетпĕр. Суйлав кунĕнче—ийунĕн 26-мĕшĕнче пирĕн суйлавçăсем хăйсен сасĕсене Зойа Ананйĕвнă Андрейĕвă йулташшăн парĕç. Вĕсем Шĕнер суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Тимофей Васильевич Васильев йулташшăн сасăлĕç.

„Балтиец“ колхоз йалсоветра пур йенпе те малти ĕретре пырать. Колхоз кăçалхи çураки ĕçĕсемпе районра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Çураки пĕтнĕ хыççăн, тислĕк тăкса, ирхи çĕртме сухине сухаланă.

Пирĕн колхоз иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илнипе Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкинче пулма тивĕçлĕх илчĕ. Çакă пире кăçал тата лайăхрах ĕçлесе, йалхуçалăхĕнче çĕнĕрен çĕнтерÿсем тума хушать. Çавăнпа пирĕн колхозниксем уйри калчасене лайăх пахса çитĕнтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Халь вăрлăхлăх участкăсемпе клевĕре çумкуракĕсенчен тасатнă.

Епĕр 1938 çулхи çулйĕр ĕçĕн планне те тултарнă. Государствă умĕнчи обйазателствăсене ийунĕн 26-мĕшне пĕтĕмпех парса татнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешетпĕр.

Пирĕн колхозниксем суйлав кунне—ийунĕн 26-мĕшне йалхуçалăхĕнчи пысăк çитĕнÿсемпе кĕтсе илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Колхоз председателĕ
И. Михайлăв.

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Пăлхавçăсен самольочĕсем Франци çĕрĕ çине бомбăсем пăрахнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, ийунĕн 5-мĕшĕнче Испанири пăлхавçăсен самольочĕсем Пиреней тăвĕсенчен хĕвелтухăçнелли районта Франци çĕрĕн чылай пункчĕсем çине каллех пырса бомбăсем пăрахнă. Пăлхавçăсен 9 самольочĕ мĕн пурĕ 10 бомбă пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе Транспиреней чукунçул линине сийенленĕ, пысăк вăйлă електропровода çĕмĕрнĕ, вăл електропроводпа Тилузă хули те усă курнă.

Фашиссен самольочĕсем Франци çĕрĕ çинчи хуласем тата халăх пурнакан ытти вырансем çине ирсĕррĕн тапанни пĕр хут кăна мар пулнă. Епĕр нумайăх пулмасть Испанири пăлхавçăсен самольочĕсем Франципе Испани чиккинчи Сербĕрă йатлă хула çине тапăнни, ун çине бомбăсем пăрахни çинчен пĕлтернĕччĕ.

Испанири пăлхавçăсен халиччен курман пÿтсĕр провокацилĕ ĕçĕсенчен Франци общественнăçĕ хытă тĕлĕнет. Франци пичечĕ фашиссен самольочĕсен çакăн пек ирсĕр ĕçĕсем тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнма ыйтать.

„Пополер“ хаçат: „Бургосре (Испанири пăлхавçăсен штабĕ) çакна пĕлсе тăччăр: Франко хăйĕн хăрушла вăййине тума çийĕнчех чаранмасан, вăл тĕлĕшпе хайар мерăсем йышăнмала пулать“,—тесе çырать“.

Бомбăсем пăрахни вăл,—тесе çырать „Ордр“ хаçат,—провокацийуни пулать, ăна йанăшнипе пулнă тесе калама май çук. Самольотсем çĕр çумĕнчен 1.000 метртан та айалтарахра вĕçнĕ. Пирĕн Пиреней чиккинче халех зенитлă батарейсене кирлĕ чухлĕ лартса тухмала, унта истребителсене йамала, пирĕн территори çийĕпе вĕçме хăтланакан йут çĕршывсен çар самольочĕсене пурне те пĕр пăркаланса тăмасăр пеме тытăнмала“.

(ТАСС).

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикă çарĕн артиллерисĕсем.
(Сойузфото).

Германири служащисен ĕç кунĕ ÿсни

Фашисла Германире государствă тата уйрăм учреждениссемпе предприйатисенче ĕçлекен служащисем вальди 51 сехетлĕ ĕç ерни тăваççĕ. Çак тĕлĕшпе кăларнă саккун тăрăх, „хăшпĕр чухне“ çав палăртнă сехетрен ытлашши ĕçлеме ирĕк параççĕ, анчах уншăн тÿлемеççĕ.

(ТАСС).

Йапонĕцсенчен тытса илнĕ вăрçă хатĕрĕсен выставки

Ийунĕн 2-мĕшĕнче Учанре Китай çарĕсем йапонецсенчен тытса илнĕ вăрçă хатĕрĕсен выставки уçăлнă. Выставкă уçăлнă хыççăн, ăна йутçĕршыв корреспонденчĕсем пăхса тухнă. Выставкăна Китай çарĕсем тĕрлĕ фронтсенче тытса илнĕ. Йапонин тĕрлĕрĕн хĕçпăшалĕсене тата вăрçă хатĕрĕсене тăратнă. Кунта танкран пуçласа Йапонин чылай телисманĕсем вĕсене Йапони салтакĕсене “пульăран хăтăлма“ тăхăнма хушаççĕ, таранах пур. Тайерчжуан сывахĕнчи çапăçура тытса илнĕ Йапонин газ баллонĕсем питĕ тĕлĕнмеле. Йапони салтакĕсемпе офицерĕсен документчĕсем, çырăвĕсем, дневникĕсем хушшинче Йапони çарĕн вăрçăна хирĕçле шухăшне кăтартаканнисем нумай. Çавнашкалах Йапони войенщчинин чунсăрлăхĕ тата вăл тыткăна лекнĕ Китай çыннисемпе мирлĕ халăхпа тискеррĕн пулни çинчен кăтартакан документсем пур.

Выставкăра Китай çарĕсем вăрçă пуçланнăранпа апрелĕн 30-мĕшчен мĕн чухле çар хатĕрĕсем тытса илни çинчен калакан официаллă сведĕнисем пур. Китай çарĕсем 21400 винтовка ытла, 1.227 пулемет, 101 траншей мортирĕ, 40 тупă, 85 танк тытса илнĕ. Кунсăр пуçне 149 тупă, 246 танк, 2.229 грузовик 46 зенитлă тупă тата 381 траншей мортире стройран кăларнă.

(ТАСС)

Бельги общественнăçĕ Совет пианисĕсемпе пит интересленет

БРУÇÇЕЛЬ, ийунĕн 4-мĕш. (ТАСС). Ежен Изай йачĕпе пулса иртнĕ пĕтĕм тĕнчери пианиссен конкурсĕ пĕтнĕренпе темиçе кун иртрĕ. Бельги общественнăçĕ совет музыканчĕсемпе халĕ те çаплах пит интересленет. Бельги хаçачĕсенче ССР Сойузĕн полпредстви туса иртернĕ йышăнура тухса вылянă тăватă çамрăк пианис çырнă статйасем пичетленĕ. Пичет вĕсен вăййине пысăккăн хаваслăнса хаклать.

Гилельпа Флийер халь ийунĕн 8-мĕшенче пулмали концерта хатĕрленеççĕ.

Республикă бойецĕсен хайулă ĕçĕ

Хĕвелтухăçри фронтра Леванта районĕнче пăлхавçăсем, чылай вырăнсенче чукунçул линисене татса республикăн пĕр бронепойăсне республиканецсен ытти бронепойăсĕсенчен уйăрса илнĕ. Пойăс 24 сехет хушши пĕр вырăнта чарăнса тăнă. Ун çинчи командă, пулеметсенчен тата пăшалтан персе тăрса, фашиссене пойăса çавăрса илме паман. Çĕрле кăна республиканецсем пойăса пăрахса хăварнă, вĕсем хăйсемпе пĕрле пулемет илсе хăйсеннисем патне тарса тухнă. Тепĕр кун çĕрле вĕсем, икĕ ротă çуран çарсем хÿтĕлесе пынипе, пойăс патне кайнă, ăна хăйсен линийĕ çине илсе кăларасшăн пулнă. Пойăс сассипе пăлхавçăсене хускатас мар тесе, республикă бойецĕсем пойăса рельсăсем тăрăх алăпа тĕксе, шутарса пынă, фашиссем çĕмĕрнĕ рельсăсене йусаса пынă. Çапла вара çак хайулă отрйад çĕрлехи тĕттĕмлĕхпе усă курса, бронепойăса республикă территорине илсе тухнă.

(ТАСС).

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсем

Зойа Ананйĕвнă АНДРЕЙĔВĂ

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕрпӳ суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Чăваш республикĕнчи чи лайăх хĕрарăмсенчен пĕрне, çиçĕп большевика - Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне - Зойа Ананйĕвнă Андрейĕвăна Сентĕрварри районĕнчи спирт савăтĕнчи, судоверфри рабочисемпе служащисем, инженерла-техника работникĕсем тата „Этна“, „Память Ленина“, „Большевик“, „Пионер“, „Звезда“, „Кунер“, „Красная Волга“, Ворошилов йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем Çĕрпӳри 719-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Çавăн пекех тата Тутаркас районĕнчи Шомикри „Колос“ колхозри колхозниксем Зойа Ананйĕвнă Андрейĕва йулташа Мăн Сентĕрти (Тутаркас р.) 7-мĕш номерлĕ суйлав округĕ тăрăх Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Зойа Ананйĕвнă 1899 çулта Вăрнар районĕнчи Уравăш йалĕнче йалти чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Октябрĕр революцийĕ унăн пурнăç çулне анлăн уçса пачĕ. Унăн йăлапула-ĕçлĕ пурнăçĕ совет государствин малтанхи çулĕсенче пуçланать.

Çак вăхăт тĕлнелле вăл йалти учительница пулнă. Çамрăк Зойа Ананйĕвнă Октябĕр революцин малтанхи кунĕсенчех йалти общественнăй организацисенче активлăн ĕçлесе пынă, ĕççынисен телейлĕ, савăнăçлă, çĕнĕ пурнăçне тăвас ĕçе хастарлăн хутшăннă.

1925 çулта, хăйне Туçа вулăçĕнчи ĕçтăвакан комитет председателĕн заместительне суйлана хыççăн, Зойа Ананйĕвнă совет ĕçне куçат.

Унтанпа 13 çул хушши вăл совет тата парти органĕсенче чылай çĕрте ответлă вырăнта ĕçлет. Вăл ПСК(б) Парти Йетĕрне тата Çĕрпӳ уйес комитечĕсенче хĕрарăмсен организатăрĕ пулса тата ытти ĕçсенче те ĕçлет.

Общественнăлă пысăк ĕçсене туса пырса, хăйĕн идейăлă-политикăлă пĕлӳне кунран кун, çине тăрса хăпартса пынипе, Зойа Ананйĕвнă йалти йăдовой учительницăран государствăн деятелĕ пулса тăчĕ. Чăваш АССР-чи Советсен Х-мĕш сйесĕ Зойа Ананйĕвнăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет членне суйлат, Чăваш АССР Социаллă пулăшу халăх комиссарĕ туса хурат. Зойа Ананйĕвнă—Чăваш хĕрарăмĕсенчен пирвайхи халăх комиссарĕ.

Унтан Зойа Ананйĕвнă Рабочисемпе Хресчĕнсен Инспекцийĕн халăх комиссарĕнчи органĕсене, парти коллегийĕн тата ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш АССР-ни уполномоченнăйĕн аппарачĕсене ĕçлет. Кунта вăл аппаратăнче бюрократисăма хирĕç хăйăрăн кĕрешсе пычĕ, парти тата совет аппарачĕсен халăх тăшманĕсене—чылай вăхăт ĕçлесе, совет аппарачĕсене фашисăм агенчĕсене, троцкисене, бухаринецсене тата буржуазла-националисене тасатас тĕлешпе ĕçлесе пычĕ. Вăл çирĕп большевик пулса тăнине, халăх тăшманĕсене кĕрешме пултарнине, Ленин—Сталин парти ĕçне пĕтĕм вăй-хала туса пынине ĕçпе кăтартрĕ.

Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн VIII-мĕш сессийĕ Зойа Ананйĕвнă Андрейĕвăна Чăваш АССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председательне çирĕплетрĕ. Чăваш республикин историйĕнче Тĕпĕçтăвкома йертсе пырас ĕçе, хĕрарăма партин халичĕ пулман.

Çакă ĕнтĕ вăл ĕçхалăх хĕрĕн ĕçĕпе кĕрешĕвне чаплăн хаклани пулат. Ку тĕслĕх чăваш ĕççынни хĕрарăмĕсене хавхалантарат.

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерӳ тунипе ССР Союзĕн Верховнăй Советне суйланă чухне, Андрейĕвă йулташа ССР Союз Верховнăй Совечĕн депутатне суйласа хăварчĕç.

Алексей Афанасйĕвич МАЛИНИН

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Çĕмĕрле суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

... Ишĕлсе анас пек ларакан хура пӳртсем. Ним илемлĕхĕ те пулман ун чухне Шăматра. Çакăнта ĕнтĕ 1897 çулхи октябĕрĕн 10-мĕшĕнче чухăн хресчен çемйинче Алексей Афанасйĕвич Малинин йулташ çуралнă. Унăн ашшĕ тарçăра пуранна. Алексей чĕчĕ ачи чухнех ашшĕнчен тăлăха йулнă. Вăл тăлăхăн çитĕннĕ.

1906 çулта Алексей Малинин Шăматри шкула вĕренме кĕрсе, 1910 çулта вĕренсе тухнă. Унтан Хучашри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Йăвăр чирпе чирленĕ май, Малинин йулташ ку шкултан вĕренсе тухайман.

Пурнăç чухăн пулнă пирки малала вĕренме май килмен. Малинин йулташăн ирĕксĕрех тĕнче тăрăх „телей“ шырама тухса кайма лекет. Çапла вара, 1912 çулхи май уйăхĕнче вăл тăван йалĕнчен тухса кайат. Тĕрлĕ çĕрте, тĕрлĕ вырăнта ĕçлет. Василсурскинче Лобанăв сутăç патĕнче çăкăр пĕçерсе пуранат. Чулхулара дворникре, унтан Атăл çинче икĕ çул хушши матрус пулса ĕçлет.

1914 çулта тăван йалне таварăнса 1916 çулччен килте йалхуçалăх ĕçĕпе ĕçлесе пуранат.

1916 çулта Малинин вулăс канцелярийĕнче хуралра пуранат. Çав çулах ăна патша çарне илсе кайаççĕ.

Патша çарĕнчен таварăнсан каллех йалхуçалăх ĕçĕнче ĕçлет. 1918 çулта Хĕрлĕ Çара кайат. Унта 1921 çулччĕнех шуррисене хирĕç çапăçат. Хĕрлĕ Çартан таварăнсан йалта, совет влаçне хирĕçле агитацилекен кулаксемпе карма-çăварсене хирĕç вирлĕн кĕрешет.

Йалта пуранна вăхăтра вулĕçтăвкомра делопроизводитĕл, кайран йалсовет председателĕ, Шăмат йалпо правленинче счетовод пулат.

1930 çул. Шăматри „Ударник“ колхоз саланса кайма патнех çитнĕ. Кулаксем колхоз çинчен тĕрлĕрен суйа сăмахсем, елексем сарса çӳренĕ, колхоза салатасшăн кĕрешнĕ. Çак вăхăтра Малинин йулташа колхоз председательне суйласа лартаççĕ. Вăл тăрăшса ĕçленипе колхоза салатма паман, ăна малти рете кăларнă.

1930 çулта ăна, колхоза малти рете кăларнă хыççăн, иккĕмĕш хут Шăмат йалсовет председательне суйланă. Йалсовечĕ те, колхоз та районра малти ретре тăнă. Çакăн хыççăн Малинин йулташăн лайăх, паха, кăтартулă ĕçĕсене курса 1931 çулта райколхозсойуз председателĕн заместительне лартаççĕ. Кунта 1933 çулччен ĕçлет. 1933 çулта районри çĕрĕç пай пуçлăхĕ таваççĕ. Кунта вăл 1937 çулхи ийуль уйăхĕччен ĕçлет.

1937 çулхи ийуль уйăхĕнчен пуçласа нойабĕрĕн 7-мĕшĕччен ПСК(б)П Йетĕрне райком çекретарĕн заместителĕ тата кайарахпа райкомăн III-мĕш çекретарĕ пулат. Нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче райĕçтăвком председательне суйлаççĕ.

Малинин йулташ 1931 çултанпа ПСК(б)П членĕ, 1931 çултанпа райĕçтăвком членĕ, 1933 çултанпа ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕн членĕ пулса ĕçлет.

Алексей Малинин ĕçре пиçнĕ çын.

РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Çĕмĕрлери 720-мĕш номерлĕ суйлав округĕнчи комиççи РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Йетĕрне райĕçтăвком председателĕн Алексей Афанасйĕвич Малинин йулташăн кандидатурине регистрациленĕ.

Малинин йулташ ун çине хунă пысăк шанăça тивĕçлĕ. Хăй çине хунă шанчăка вăл ĕçпе ответлетех.

Ник. Цветков.

Александр Иванăвич ПОЖЕДАНĂВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тĕрлемес суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Александр Иванăвич Пожеданăв йулташ 1897 çулта Йĕпреç районĕнчи Хырхĕрри йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. 1909 çултан 1912 çулччен йалти шкулта вĕреннĕ. Шкултан вĕренсе тухсан, ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле çĕр ĕçне ĕçленĕ. 1916 çулта Пожеданăв йулташа патша çарне илсе Румыни фронтне йанă. Румыни фронтĕнчен 1917 çулта таварăннă. Рабочисемпе Хресчĕнсен Хĕрлĕ Çарне тума пуçласанах, Пожеданăв йулташ 1918 çулхи март уйăхĕнче хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çарăн Хусанти 1-мĕш полкне кайат.

Пожеданăв йулташ Хĕрлĕ Çартан таварăнсан, совет ĕçне ĕçлеме куçат. 1922 çулта ăна Патăрйел уйесĕнчи ĕçтăвакан комитет членне суйлаççĕ. Кун хыççăн вăл уйесри ĕçтăвакан комитетра 1925 çулччен ĕçлет. 1925 çулта ăна парти организацийĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи парти работникĕсен курсне вĕренме йарат. Пожеданăв йулташ курсран вĕренсе тухсан, 1926 çултан 1929 çулччен ПСК(б)Партин уйесри комитечĕн орготдел пуçлăхĕ пулат. Унтан ПСК(б)П Йĕпреç райком çекретарĕ. ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕн инструкторĕ. 1929 çулта ăна суту-илӳ организацисен ĕçĕсене çирĕплетме куçараççĕ. 1929 çултан 1931 çулччен вăл Чăвашсойуз правлени председателĕ, 1931 çултан 1932 çулччен Чăвашторг директорĕ.

1932 çултан 1937 çулхи ийуль уйăхĕччен Пожеданăв йулташ ПСК(б)Парти Куславкка райкомĕн çекретарĕ, 1937 çулхи ийуль уйăхĕнчен ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕн промышленнăçпа транспорт пайĕн пуçлăхĕ.

Пожеданăв йулташа ПСК(б)П Чăваш Обком пленум членне суйланă, 1931 çултанпа Чăваш Тĕпĕçтăвком членĕ.

1919 çулхи ийуль уйăхренпе ПСК(б)Парти членĕ.

Пожеданăв йулташ коммуниссен партийĕ хушнă ĕçсене пĕтĕм вăйне тăрăшса пурнăçлана. Вăл пирĕн социалисăмла çĕршыв çирĕпленессишĕн, унăн чечекленнишĕн, рабочисемпе хресчĕнсен телейлĕ пурнăçĕшĕн хăйĕн пĕтĕм пĕлĕвĕпе вăйне хурса ĕçлет.

Халĕ Александр Иванăвич Пожеданăв йулташ кандидатурине Куславкка районĕнчи „Коммунар“ тата Карл Маркс йачĕпе тăракан колхоз колхозникĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Пожеданăв йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Тĕрлемес суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ регистрациленĕ.

Николай Çеменăвич БОДРОВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Йĕпреç суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат.

Николай Çеменăвич Бодров 1905 çулта рабочи çемйинче çуралнă. Ашшĕ Çемен Порфирйĕвич Бодров 1917 çулччĕнех, нумай вăхăт хушши Йĕпреçри хăма çуракан савăтра механик пулса ĕçленĕ.

Микулан ашшĕ вилсен 13 çултах йăвăр ĕçсем ĕçлемеле пулнă. 1918 çултан 1922 çулччен Йĕпреçри хăма çуракан савăтра кочегарта пулнă. Кунта Бодров йулташ Вăрмарти сĕтел-пукансем тăвакан „Единство“ хапрăка слесарьра ĕçлеме куçнă. Йулашкинчен, квалификацине хăпартмали курсра вĕренсен, механик пулса ĕçленĕ.

1927—29 çулсенче Хĕрлĕ Çарта пулнă. Хĕрлĕ Çартан таварăнсан Бодров йулташ Буинскри хăма çуракан савăтри аслă механик пулат.

Бодров йулташ общественнăлă-политикăлă ĕçсене активлăн хутшăнат, партипе правительствă панă задачăсене вăхатра та тĕплĕн пурнăçлассишĕн тӳррĕн тăрăшса ĕçлет.

Вăл халăх хушшинче пысăк авторитетлă. Ăна халăх шанат. Вăл Ленин—Сталин партишĕн вăйран тăрăшса ĕçлекен пултарулă çын.

Николай Çеменăвич Бодров йулташ кандидатурине Буинскри хăма çуракан савăтри рабочисемпе служăщчисен, инженерла-техникла работниксен тата „Заря“, „Победа“ колхоз колхозникĕсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

Йĕпреçри суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ Бодров йулташ кандидатурине Чăваш АССР Верховнăй Совстне депутата суйлама регистрациленĕ.

Грабăвă Йевдокийа Федăрăвнă. Ăна Стемас суйлав округĕнче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата регистрациленĕ.

Алексей Çергейĕвич ТОЛСТОВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Штанаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Улма-çырла йăвăççисем айĕнчен илемлĕн куранса ларат Тăвай районĕнчи Лачкасси йалĕ. Йал тавра тинĕс пек хумханса çитĕнекен ç\u0443ртри тата ыраш калчи йешĕрсе усет. Колхоз хирĕнчи калчасем кăçал иртнĕ çулхинчен те лайăхрах. Кăçал тыра татах та тухăçлăрах пуласса шантараççĕ.

Алексей пĕчĕккĕ чухне ку хирсем куп пек пулман. Кунта вăл анасемпе йăрансем хушшинче, калчинчен ытла сумкурăк кашлана. Çĕртен тухăç ытла та сахал илнĕ. Йалти чухăнсен нихçан та çиме çитмен. Чухăнсем йунĕ хакпа пуйансем патне ĕçлеме кайса тертленнĕ.

Çак чухăн та тухăççăр вак уйхирте пĕчĕклех Алексей кĕтӳре çӳре пуçлана. Вăйлă çăмăрпа йĕпенĕ, кĕрхи сивĕпе йĕпе-сапа çанталăкра шăннă Алексей.

Революциччен Алексейĕн савăнăçлă пурнăç пулман, вăл кĕтӳре çӳренĕ, Канашра хуралçăра т. ыт. те ĕçленĕ.

1917 çул. Рабочисемпе хресчĕнсем влаçа хăйсен аллине илчĕç. Çĕршыври пĕтĕм ĕçхалăхĕ савăнăçлăн, кăкăр туллин сывласа йачĕ. Çак вăхăтран вара Алексейĕн те çĕнĕ вăхăт, çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ.

Канашра хуралçăра ĕçленĕ хушărах хăйĕн пĕлӳлĕхне ӳстерес тĕлĕшпе те ĕçлет вăл, библиотекăран, лавкасенчен çĕнĕ кĕнекесем илсе вулат. Ленин—Сталин пурнăçĕпе тата ĕçĕсемпе паллашат. Çапла Канашра хуралçăра ĕçленĕ хушарах хăй тĕллĕн вĕренсе, Хусана рабфака кайса кĕрет. 1921 çулта рабфакран вĕренсе тухмасăрах хăйсен çемйипе Çĕпĕре пурăнма куçаççĕ. Çĕпĕре куççан 1921 çулта ПСÇЛКС членне кĕрет. Унта вăл 1931 çулччен профсойуз йĕнĕпе тĕрлĕрен ответлă вырăнсенче ĕçлет.

1931 çулта Чăваш республикине килсе, парти йĕнĕпе ĕçлеме пуçлат. 1931 çулхи çентабĕр уйăхĕнчен 1934 çулхи март уйăхĕччен Тутаркас унтан Вăрнар районĕсенче районри Рабочисемпе Хресчĕнсен Инспекцин председателĕ пулат. 1934 çултан ПСК(б)П. Тутаркас райком çекретарĕн заместителĕ, 1937 çулхи апрел уйăхĕнче ПСК(б)П Хĕрлĕ Чутай райкомĕ пĕрремĕш çекретарне суйлаççĕ. Партин облаçри XVIII-мĕш конференцийĕ ăна ПСК(б)П Обком членне суйласа хăварат.

Толстов йулташ ПСК(б)Партийĕ ĕçлеме хушнă ĕçре пур çĕрте те тӳррĕн, чыслăн ĕçленĕ. Халăх шанăçне пĕтĕм вăйĕпе тăрăшса пурнăçлана.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи ĕçлевырăнсене кĕрсе ларнă халăх тăшманĕсене тасатас ĕçре Толстов йулташ ĕççыннисен массипе пĕрле вирлĕн ĕçлерĕ. Вăл хăй ĕçлеме пуçланă кунранах Ленин—Сталин партийĕшĕн вăйран тăрăшса ĕçленине кăтартрĕ.

Халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçлама пултарнине пула та ĕнтĕ Алексей Çергейĕвич Толстов йулташа Хĕрлĕ Чутай районĕнчи „Правда“, „Заря“, Буденный йачĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç. Ăна Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Штанаш суйлав округĕнчи суйлав комиççийĕ регистрациленĕ.

Прасковйă Иванăвнă НОВИКĂВĂ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Рйабинă суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Пăрачкав районĕнчи „Победа“ колхоз колхозникĕсемпе Рйабинă суйлав округĕнчи суйлавçăсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама Прасковйă Иванăвнă Новикăвă йулташ кандидатурине тăратнă.

Новикăвă йулташ 1900 çулта Пăрачкав районĕнче Пăрачкав йалĕнчи грузчик çемйинче çуралнă.

Новикăвă йулташăн çемйи 1929 çултанпа „Передовик“ колхозра тăрат. Ашшĕ колхоз пуçланнăранпах колхозри пылхурчĕсен утарĕнче хуралçăра ĕçлет.

Прасковйă 1918 çулта хĕрарăмсен Ардатăври гимназинчен, 1922 çулта учителсен Пăрачкаври семинаринчен вĕренсе тухат.

1922—1923 çулсенче Иванăвкăри (Кувакинă р.) пуçламĕш шкулта вĕрентет. 1923 çулхи декабĕр уйăхĕнчен Ардатăвă уйезĕнчи Бутырка йалĕнче учительницăра ĕçлет. 1924 çулти декабĕрĕн 1-мĕшĕнче райçутĕç пайĕ хушнипе Мишуковри (Кувакинă р.) шкулĕнче вĕрентет. Кунта вăл 1925 çулхи çентабĕрĕн 20-мĕшĕччен ĕçлет. Сывлăх начарланма пуçланине сиссе, вăл 192... çулта çурçĕр Кавказри Ейски районне ĕçлеме куçат. Кунта вăл 1931—33 çулсенче Далжанскай тата Çĕнĕ Шчербинск станицисенче учительницăра ĕçлет.

1933 çул вĕçĕнче отпуск хыççăн хăйĕн тăван йалне Пăрачкава куçса килет. Тăван йалне килсен, ПСК(б)П Пăрачкав райкомĕнче парти кабинетĕнче библиотекăр пулат. Парти кабинетĕнче 1934 çулхи февралĕн 5-мĕшĕччен ĕçлесен, Лобачĕвскăри пуçламĕш шкула вĕрентме кĕрет. Ку шкулта вăл пайанхи кунччен вĕрентсе пуранат.

Новикăвă йулташ пур вырăнта та кăтартулăн ĕçленĕ. Ăна педагогикă ĕçĕнче лайăх ĕçленĕшĕн темиçе хутчен те укçан тата каймалли çурта каймали путевкăсемпе премиленĕ.

18 çул хушши педагогикă ĕçĕнче ĕçлесе вăл темиçе çĕр ачана вĕрентсе кăларнă. Вăл вĕрентнĕ ачасем халĕ нумайĕшĕ: Хĕрлĕ Çарта лейтенант, трактăрис, летчик, инженер, тухтăр, агроном, учитель т. ыт. Вăл малтан вĕрентсе пуранна йалсенчи ачасен ашшĕ-амăшĕсем халĕ те Новикăвă йулташа асилсе тав тăваççĕ.

Далжанск станицинче учительницăра чухне йединоличниксене колхоза кĕртес тĕлĕшпе вăйлăн ĕçленĕ. Далжанск станицинчи хресченсем вăл тăрăшнипех 96 процент колхоза кĕнĕ. Çак вăхăтра Новикăвă йулташ йалти учителсен комитечĕпе методикă йачейки председателĕ те пулнă.

Новикăвă йулташ ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхатĕнче участкăри суйлав комиççин çекретарĕ пулнă. 1938 çулти мартăн 1-мĕшĕнченпе ПСК(б)П членĕнче тăрат.

Прасковйă Иванăвнă Новикăвă йулташ Ленин—Сталин партин шанчăклă хĕрĕ, вăл Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ пулма тивĕçлĕ кандидат.

Çергей Кçенофонтăвич КОРОТКОВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Клĕмкасси суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Çергей Кçенофонтăвич Вăрнар районĕнчи Кольцовкă йалĕнче 1908 çулта çуралнă. Ашшĕ-амăшĕсем тата тăванĕсем чухăн хресчĕнсем пулнă. Çемйери 12 çын пĕр йатак çĕрĕпе пуранна.

Ç. К. Коротковăн ашшĕ 1914 çулта вилнĕ. Çав çулах амăшĕ суккăр пулнă. Коротковсен çемйи кун хыççăн йăвăр тата асаплă пурнăçпа пурăнса иртерне.

1919—1920 çулсенче Çергей Коротков йалти пуçламĕш шкулта вĕреннĕ, анчах та чухăн пурнăçа пула, вĕренсе тухайман. 1921 çул вĕçĕнче вăл Благое хулинче Хĕрлĕ Çарта пурăнакан аслă пичĕшĕ—Андрей патне тухса кайат. Кунта Çергей 127-мĕш бригадăри 381-мĕш стрелковăй полкри 3-мĕш батальйонра доброволец пулса, батальйон командирĕн посыльнăйĕ пулса ĕçлет.

1922 çулта хăйĕн тăван йалне, Вăрнар районĕнчи Кольцовкăна таварăнат. Хăйĕн амăшĕн хуçалăхĕнче тата вăхăчĕ-вăхăчĕпе чукунçул çинче ĕçлет.

1926 çулта Коротков йулташ Мускавпа Хусан чукунçулĕн Вăрнар станцинче рабочи пулса ĕçлет. 1925 çулта ăна Кольцовкă йалсоветĕн çекретарне, унтан çав çулах йалсовет председательне суйласа лартаççĕ.

Ку ĕçре вăл—кулаксене хирĕç кĕрешме, партипе правительствăн директивĕсене вăхатра пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме—чухăнсемпе вăтам хресчĕнсене пĕрлештерет. 1929 çулта Кольцовкă йалсовечĕ государствăна тырă тăратас плана районĕпе пуринчен малтан тултарат.

1929 çулта Кольцовкă йалсоветне кĕрекен икĕ йалта (Кольцовкăпа Зеленăвкăра) колхозсем организациленĕçĕ. Кунта вăл талкишпе колхоз тунă никĕс çинче клас пулса тăракан кулаксене пĕтерессишĕн активлăн кĕрешет.

Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоза организацилесен, малтанхи кунсенчех Коротков йулташа колхоз правлени председательне суйлаççĕ.

1932 çулта Коротков йулташа Хĕрлĕ Çар службине илеççĕ, Хĕрлĕ Çар ретĕнчен 1933 çул вĕçĕнче таварăнат. Хĕрлĕ Çартан таварăнсан, ăна каллех колхоз правленин председательне суйлаççĕ.

Коротков йулташ йертсе пынипе Вăрнар районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз çултан çул ӳссе çирĕпленсе пырат. 1933 çулта ПСК(б)П Горький Крайкомĕн решенийĕ тăрăх, Сталин йачĕпе тăракан колхоза Пĕтĕм Союзри Хĕрлĕ хăма çине, 1934 çулта Горький крайĕн Хисеплĕ Хăми çине çыраççĕ.

Коротков йертсе пыракан колхозăн мухтавлă йачĕ Вăрнар районĕн тата республикĕн тулашĕнче те сарăлчĕ. 1934 çулта Коротков йулташа колхозник-ударниксен 2-мĕш сйесне суйлаççĕ. Кунта ăна президиум членĕ тăваççĕ те, вăл сйесăн малтанхи ларăвĕнчех председатĕл пулат.

1935 çулта вăйлă тырпул тăвас ĕçре пит пысăк çитĕнӳсем тунăшăн ССР Союзĕн Тĕпĕçтăвком президиумĕ Коротков Çергей Кçенофонтăвич йулташа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Йалавĕн орденĕпе наградăланă. Çав çулах вăрман касассипе турттарас тĕлĕшпе ударлă ĕçленĕшĕн вăрман ĕçĕпе вăрман йухтарас ĕçре ĕçлекенсен профсойузĕн Тĕп Комитечĕ Коротков йулташа сехетпе премиленĕ, колхозра калаçакан кино лартса панă.

Коротков йулташ ку таранччен тунă çитĕнӳсемпе лăпланмаст, вăл пĕр чарăнмасăр малала пырат. 1936 çулта, типĕ çанталăк тăнипе тырă начар пулнă çул, колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 100-шер пăт пухса, ĕçкунне 6-шар килограм тĕштырă валеçнĕ. Çав çулах колхоз 400 ача вальли вăтам шкул туса ларнă.

1937 çулта Коротков йертсе пыракан колхоз кашни гектартан вăтам шутпа 30 центнĕр тĕштырă, сĕлĕ—38,2 центнĕр илчĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне 14-шар килограм тивнĕ. Колхозниксен çемйисем 400 пăтран пуçласа, 1000 пăт таран тырă илнĕ.

Йулашки икĕ çул хушшинче колхозниксем 50 ытла çĕнĕ пӳрт туса лартрĕç.

1933 çултанпа колхозра ĕнесĕр хуçалăхсем çук. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана колхоз çулран-çулах ытлашшипе тултарса пырат.

Колхозăн пит аван клуб пур, унта калаçакан кино. Колхозăн хăйĕн електростанци, радиоузĕл пур.

Кашни колхозник килне радио кĕртнĕ. Колхоз кăçал çĕнĕ пульница туса пĕтерет.

Колхозăн хăйĕн типографи, хăйĕн хаçачĕ пур.

1925 çултанпа Çергей Кçенофонтăвич Коротков йулташ йалсовет членĕ, 1931 çултанпа Вăрнар райĕçтăвкомĕпе Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн членĕ, 1935 çултанпа ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн Совечĕн членĕ. 1936 çулта—Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сйесĕн делегачĕ.

1937 çулхи октябĕрĕн 31-мĕшĕнче Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн VIII-мĕш çессийĕ Коротков йулташа Чăваш Тĕпĕçтăвком председателĕн заместительне тата Чăваш Тĕпĕçтăвком президиумĕн членне суйларĕ.

1938 çул пуçламĕшĕнче ăна Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарне лартрĕç. 1937 çулхи декабĕрĕн 12-шĕшĕнче Короткова ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутатне суйланă.

Йĕпреç районĕнчи „Красный фронтовик“, „Красный партизан“, „Ударник“ колхозсенчи колхозниксем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕсенче ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Çергей Кçенофонтăвич Коротков йулташ кандидатурине тăратрĕç. Ку кандидатурăна Клĕмкассинчи 73-ш-№ суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ. Çергей Коротков. Ленин—Сталин партийĕ ӳстернĕ большевик. Вăл ПСК(б)Парти членĕ, большевикла партин шанчăклă ывăлĕ. Вăйлă тырпул маçтăрĕ. Вăл халăхсен ыра пурнăçĕпе телейĕшĕн, социалисăмшăн ыванма пĕлмесĕр ĕçлесе пырат.

Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Тимофей Васильевич ВАСИЛЬЕВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Шĕнер суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Çĕрпӳ районĕнчи „Ленин çулĕ" колхоз колхозникĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн çекретарне Тимофей Васильевич Васильев йултана палăртрĕç.

Т. В. Васильев йулташ 1921 çулхи июнĕн 1-мĕшĕнчепе Пĕтĕм Союзри Коммуниссен (большевиксен) Парти членĕ. 1936 çулхи февраль уйăхĕнчен вара Чăваш АССР Тĕпĕçтăвкомĕн çекретарĕ.

Тимофей Васильевич 1900 çулта, чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Хăйĕн ача чухнехи çулĕсене Вăрмар районĕнчи Кулькеш йалĕнче пурăнса ирттернĕ.

1907 çулта йалти пуçламĕш шкула вĕренме кĕнĕ, кунтан 1911 çулта вĕренсе тухнă.

Çав çулхинех кĕркунне Карачури 2-класлă шкула кĕнĕ, анчах та кунтан вĕренсе тухма май килмен. 1913 çулта пуп хушнипе Васильева шкултан кăларса йанă. Кун хыççăн вăл пите чухăн пурнăçпа пурăннă. Хăйне тăранса пурăнмалăх çăкăр тупас тесе, кĕтӳ кĕтме кайат.

1914 çулхи кĕркуннерен пуçласа çуркуннеччен Курбатовсен хапрăкĕнче чернорабочи пулса ĕçленĕ. 1915 çулхи çуркуннерен пуçласа 1916 çулхи кĕркуннеччен Любимовăн акционерлă обществинче, Атăл çинче пăрахут тата баржă çинче матрус пулса ĕçлет. Чухăн хресчен ывăлĕ матроссемпе пĕрле пурăнса чăн-чăн пурнăçа вĕренет.

Васильев йулташ 1919—1921 çулсенче Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕнче пулнă. 1922 çулта парти ăна каллех Хĕрлĕ Çар ретне йанă. 1922—1924 çулсенче Туркестан фронтĕнче басмачсене хирĕç кĕрешнĕ çапăçăва хутшăннă. Хĕрлĕ Çар ретĕнче политрук пулнă.

1925 çулхи август уйăхĕнчеппе ПСК(б)П Никольски волкомĕн çекретарĕ пулнă. 1926 çулта ăна инструктăр информатăра, июнĕн 1-мĕшĕнчеппе (çав çулхинех) ПСК(б)П Сĕнтĕрвăрри Укомĕн инструктăрне лартнă.

1926 çулхи çентабĕр уйăхĕнче Васильев йулташ Хĕвелтухăçĕнчи ĕççыннисен коммунисла университетне вĕренме кĕнĕ, унтан 1930 çулта вĕренсе тухнă. Кунтан вĕренсе тухнă хыççăн 1930 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа 1931 çула çитиччен ПСК(б)П Елĕк райкомĕн çекретарĕнче ĕçленĕ. 1931 çулхи февраль уйăхĕнчен 1934 çулччен Чăваш республикинчи Рабочисемпе Хресченсен Инспекцин-Облаçри Контроль Комиççин ответлă çекретарĕ, 1934 çулхи март уйăхĕнчен 1936 çулччен Партколлеги членĕ. 1936 çулхи февраль уйăхĕнчен ку вăхăта çити ЧАССР Тĕпĕçтăвкомĕн çекретарĕнче ĕçлет.

Васильев йулташăн партипе совет ĕçĕнче пысăк опыт пур.

Вăл партин тĕп çул-йĕрĕшĕн кĕрешсе пырат. Халăх тăшманĕсемпе—троцкиссемпе, бухаринецсемпе тата буржуалă-националиссемпе кĕрешсе, вĕсене пĕтерме пулăшат.

Павел Ананьевич БЕЛОРУССОВ

ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сикасси суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат

Павел Ананьевич Белоруссов 1909 çулта Куславкка районĕнчи Кармал йалĕнчи чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Павел Ананьевич хăйĕн ача чухнехи пурнăçне чĕре ыратнипе аса илет, унăн ачалăхĕ, çамрăклăхĕ пĕр савăнăçсăр хуйхăлăн иртнĕ. Ашшĕ 1913 çулта, амăшĕ 1923 çулта вилнĕ. Çавăнпа та Павăлăн хырăм тăрантма çынсем патне кайса ĕçлĕмеле пулнă. Вăл йалти пуйансем патне ĕнесем çитерме кайнă, улăм туранă, выльăх витисем тасатнă т. ыт. те. Пысăк йăварлăхпа вăл пуçламĕш шкултан вĕренсе тухнă.

1920 çулта 2-мĕш сыпăклă шкула вĕренме кĕнĕ. Хватершĕн тӳлеме укçа пулманнипе кашни кун шкултан 7 çухрăмра ларакан хăйсен йалне çӳренĕ. Шкула çӳреме инçе пулнипе час-часах уроксенчен йулнă. 1921 çулта вĕренме пăрахсан ачасен çуртне кайнă. Унтан 1922 çулхи койабĕр уйăхĕнче таврăннă.

Ачасен çуртĕнчен таврăнсан вăл кĕнекесене йуратса вуланă. Кашни пушă вăхăта кĕнекесем вуласа ирттернĕ. 1923 çулта комсомола кĕнĕ. Кун хыççăн Белоруссов йулташăн çĕнĕ ĕçсем пуçланнă. Вăл общĕствăлă ĕçсенче активлăн хутшăнса ĕçленĕ.

1923 çултан 1925 çулччен совпартшкулра вĕреннĕ. 1930 çулта Горькинчи коммунисла университета пропагандиссен уйрăмне кайса вĕреннĕ.

Белоруссов йулташăн партилĕ ĕçре пысăк опыт пур. 1925-1927 çулсенче вăл Чăваш Сурăмра, Асанкассинче тата Елĕк вуласĕнчи йалсенче политграматă шкулĕсенче пропагандис пулса ĕçленĕ.

1929 çултан 1930 çулччен ПСК(б)Парти Елĕк райкомĕнчи агитаципе пропагандă пайĕн пуçлăхĕ, унтан ПСК(б)П райком çекретарĕ пулат. Горькинчи коммунисла аслă шкултан вĕренсе тухсан, ПСК(б)Парти Чăваш Обкомĕнче культурăпа пропагандă пайĕн инструктăрĕ, 1933 çултан 1938 çулхи май уйăхĕччен ПСК(б) Парти Тĕп Комитечĕ çумĕнчи ИМЗЭ Чăваш уйрăмĕн директăрĕ.

Халĕ Павел Ананьевич ПСК(б) Парти Канаш райкомĕн пĕрремĕш çекретарĕ пулса ĕçлет.

Павел Ананьевич Белоруссов йулташа, вăл партипе правительствă хушнă пур ĕçре те тӳррĕн те тĕрĕссĕн ĕçлесе пынине кура, Канаш районĕнчи Сикасси суйлав округĕнчи суйлавçăсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Белоруссов йулташ халăх шанăçне тӳррĕн пурнăçлакан, Ленин—Сталин партийĕ пăхсăн çитĕнтерне большевик.

Выльăхсене чуптарас ĕçе хăвăртлатмала

СĔНТĔРВĂРРИ. Кивтутайкассинчи „Кунер" колхоз çумĕнчи чуптару пункчĕ выльăхсене чуптарас тĕлĕшпе лайăх ĕçлет. Çак пункта И. Шангов колхозник йертсе пырат. Пункт çумне çирĕплетнĕ колхозсем хăйсен кĕсрисене вăхăтра чуптараççĕ. Чуптару пунктин пурĕ 47 кĕсре чуптармала, вăл шутран ку вăхăта 35 кĕсре чуптарнă. „Кунер" колхозра 18 кĕсре пулнă. Вĕсене пурне те чуптарнă.

Иккĕмĕш Чураш, Кутемер колхозсен пункчĕсем те начар ĕçлемеççĕ. Çак колхозсен пурĕ 36 кĕсре чуптармала пулнă пулсан, 26 кĕсре чуптарнă. Пĕрремĕш Чураш колхозĕ 70 кĕсререн 43 кĕсре, Наратйал колхозĕ 54 кĕсререн 35 кĕсре, Шушăл колхозĕ 37 кĕсре чуптарнă. Аксаринри „Хĕрлĕ Етна" колхоз кĕсресене пурне те чуптарса хăварнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр йалсоветсемпе колхозсем чуптару ĕçне хакламаççĕ. Шупашкар Ĕсмĕл, Утаçкасси Акшик колхозĕсем ку вăхăтчен пĕр кĕсре те чуптарман. Çавнашкалах Аслă Кăшкари „Вулкан" колхозра 7 кĕсререн пĕрне те чуптарман.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче ĕнесене, сурăхсене чуптарас ĕç кайа йулса пырат. Çак ĕçе вăраха йарса пымала мар. Кашни ама выльăха вăхăтра чуптарса хăвармала.

П. Васильев.

*** ВĂТАКАС КИПЕКРИ (Шăхасан р.) „Память Ильича" колхоз выльăхсене ăратлантарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Кăçал колхоз выльăхсене ăратлантарас ĕçе 4 пин те 500 тенкĕ укça хывнă. Ку укçала ăратлă аçа выльăхсем туйаннă.

„Память Ильича" колхоз ăратлă аййăрсемпе 11 кĕсре чуптарса хăварнă. Колхозниксем те хăйсен ама выльăхсене ăратлă аçа выльăхсемпе чуптараççĕ.

М. ДИМИТРИЙЕВ.

*** Вăрман Йенĕшри „Свобода" колхозăн (Шăхасан р.) 13 пуç ăратлă такасем пур. Колхозниксем хăйсен килĕсенчи сурăхсене ăратлă такасемпе чуптарса хăварас тесе, ăратсăр такасене пурне те кастарнă. Анчах правленинче ĕçлекенсем сурăхсене чуптарса хăварас вырăнне, такасене кĕтĕве йамасăр, фермăри ĕнесемпе пĕрле вăрманта усраççĕ. Такасене кĕтĕве йаман пирки, сурăхсем чупмасăрах йулаççĕ.

И. ÇМИРНОВ.

Иккĕмĕш хут пулăшу илчĕ

Урапакассинчи (Йетĕрне р.) „Правда" колхоз членĕ Варварă Маргинă 7 ача амăшĕ. Иртнĕ çулта вăл нумай ачалă пирки государствăран 2 пин тенкĕ пулăшу илнĕччĕ. Илнĕ укçапа Варварă Маргинă хăйĕн ачисене кĕпе-тумтирсем, вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем илсе пачĕ. Аслă хĕрĕ Кулинă вăтам шкулта IX-мĕш класра вĕренет, виçĕ ачи пуçламĕш шкулта вĕренеççĕ.

Кăçал та вăл государствăран 2 пин тенкĕ пулăшу илчĕ.

В. А. Лизарĕв.

Савăтсенчи, колхозсенчи, Хĕрлĕ Çарти пултарулăх кружокĕсенчен тухнă талантлă йурăçăсем, актӧрсем.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: ССР Союзĕн Государствăн Ленин орденлĕ Академи Мăн театрĕн артисĕсем (сулахайран): малти ретре—Г. К. Пасечник, М. Йа. Дмитрович; иккĕмĕш ретре—А. П. Любимов, Г. Б. Коротков.

А. Поселович фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Куллен кирлĕ таварсене туса кăларасси çинчен

Сталин йулташ партин XVII-мĕш сйесĕнче промышлĕннăç ӳсниие кăтартса пана чухне çапла каланă:

…„Пур хуçалăхлă халăх комиссариачĕсем йенĕпе те куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе сарса йамала.

Советсен вырăнти промышлĕннăçне саралса кайма май туса памала, ăна куллен кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе пуçарулă ĕçсем туса пыма май памала, ăна чĕр таварпа, укçа-тенкĕпе май пур таран пулăшмала.

Туса кăларакан таварсен пахалăхне лайăхлатмала, туса пĕтермен продукци кăларса йарассине пĕтермеле, Совет влаçĕ продукци пахалăхĕпе продукцине пĕтĕмĕшпех туса çитерсе кăларасси çинчен йышăннă саккунсене пăсакан йе вăл саккунсенчен пăрăнакан йулташсене, вĕсем кам иккенне пăхмасăр, тивĕçлипе айăпламала".

Сталин йулташăн çак кăтартăвĕсем хуçалăхлă тата ытти организацисен куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçĕнчи программи пулса тăмала.

Государствă промышлĕннăçĕ хăвăрттăн ӳссе пырат пулин те, промысла кооперацин йалти халăх валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларас йенĕпе пысăк вырăн йышăнса тăрат-ха. Промысла кооперацин ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсене нумай туса кăлармала. Унăн пысăк пахалăхлă атă-пушмаксем, хуçалăхра куллен кирлĕ таварсем, илемлĕ йапаласем, шкулта вĕреннĕ чухне кирлĕ пулакан йапаласем, ачасене выльамали йапаласем, музыкă инструменчĕсем т. ыт. те ытларах туса кăлармала.

Йулашки çулсенче республикăри промкооперации куллен кирлĕ таварсем туса кăларнин ӳсни палăрат. 1936 çулта вăл куллен кирлĕ таварсене 20,6 мĕлйун тенкĕлĕх туса кăларнă пулсан, 1937 çулта 23 мĕлйун та 300 пин тенкĕлĕх, йе 2 мĕлйун та 700 пин тенкĕлĕх ытларах кăларнă. План тăрăх 1938 çулта куллен кирлĕ таварсене 27 мĕлйун та 800 пин тенкĕлĕх кăлармα, иртнĕ çулхипе танлаштарсан 19,4 процент ӳстерме палăртнă.

Облаçри парторганизаци тата Чăваш Тĕпĕçтăвкомĕн X-мĕш çессийĕ хуçалăхла организацисене, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерсе, стахановла ĕçлесе пынипе, предприйатисене чĕр таварсене, çунтармали тата ытти йапаласене вăхăтра парса тăнипе, предприйатисене организаципе практикă йенчен йертсе пырассине ӳстернипе куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçре пысăк çитĕнӳсем тума хушса хăварнă.

Анчах, промысла союзĕсен, ертелсен тата промколхозсен руководителĕсем çав кăтартусене пурнăçламан. Çавна пула 1938 çулхи йанвар, февраль, март, апрель уйăхĕсенче куллен кирлĕ таварсем туса кăларассине тултарайман. 4 уйăх хушшинчи производствă программине 84,3 процент, çулталăк планне 35,4 процент çеç тултарнă. Уйрăмах Культпромсойуз çистеми плана начар тултарнă (65 процент).

Промысла союзĕсем таварсен ассортимент планне тултарассишĕн куллен-кун кĕрешмеççĕ-ха. Çавна пула куллен кирлĕ уйрăм таварсем туса кăларассин çулталăк планне тултарасси хăрушлăх умĕнче тăрат. Сăмахран, промсойуз йенĕпе урапасене сĕрмели маç туса кăларас плана—17,9 процент, шкул ачисене урана тăхăнмали йапаласем—27,5 процент, чемодансем—21,5 процент, вăрманпромсойуз йенĕпе арчасем—25 процент, тĕрлĕрен посудăсем—20,5 процент, культурăпа художĕствăла йапаласем—10,7 процент, Культпромсойуз йенĕпе тăрантас корзинкисем—21,6 процент, пасар корзинкисем—2 процент, çапатасем—8,8 процент çеç тултарнă.

Çĕнĕрен тĕрлĕ йапаласем туса кăларасси пит начар пырат-ха. Хуçалăх организацисен руководителĕсем „промфонд çук" тенĕ сăлтавпа ку ĕçрен пăрăнма пăхаççĕ. План тăрăх, 1938 çулта промсойуз йенĕпе çĕнĕрен производствăсем: ача-пăча кравачĕсем (Сĕнтĕрвăрринче)—500 штук, трикотаж спорт кĕписем—5 пин те 400 штук, улăм шлепкесем, хоккей кульушкисем 2 пин штук (Пушкăртра) туса кăларассине организациламе палăртнă. Апла пулсан та 4 уйăх хушшинче йăвăç метрсем тума тата питшăлисем тума (Канашра) çеç тытăннă. Ытти йапаласене туса кăларас ĕçе ку вăхăтченех пуçăнман. Промкооперацин ытти çистемисенче те ĕçсем çавнашкалах. Таварсен пахалăхне ӳстерессишĕн промкооперацинче пачах кĕрешмеççĕ. Акă, Ленин йачĕпе тăракан ертелте тата Промсойузăн Кожупрйаж ертелĕнче отчот тăрăх брак пĕртте пулмай пек курăнат, анчах ĕçре пачах урăхла, заказсене брак туса кăларни те пулат. Предприйатисенче браксене тĕрĕслекен комиççисем ĕçлемеççĕ, вĕсем нумай çĕрте пĕтсе ларнă.

Продукци тума ларакан хака йӳнетес тĕлĕшпе ертелсенче те, çавăн пекех союзсенче те нимĕн те тумаççĕ. Таварсен пахалăхĕ начар пулсан та, вĕсен хакĕсем хаклă (Вăрманпромсоюзĕ йенĕпе сĕтел-пукансем). Хăшпĕр союзсем, сăмахран вăрманпромсойуз тата культпромсойуз хăйсем туса кăларакан продукцисене сутас йенĕпе вырăнти суту-илӳ организацисемпе халиччене договăрсем туман.

Производствă планне тултарманнин, продукци пахалăхĕ начаррин, таварсене сутма договăрсене вăхăтра туманнин тĕп сăлтавĕ вăл союзсем куллен кирлĕ таварсене йышлăн туса кăларасси хуçалăхла-политикăлă пысăк вырăн йышăнса тăнине хакламанни пулат.

Куллен кирлĕ таварсем туса кăларасси çине çавăн пек пăхнине малашне чăтма çук. Промысла союзĕсен, ертелсен, промколхозсен председателĕсем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсене хăвăртрах пĕтерсе, стахановла йухăма сарса пынипе куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе большевикла тытăнмала. Çавна май предприйатисене чĕр таварсемпе материалсене вăхăтра парса тăрса, 1938 çулхи плана пысăк пахалăхпа тултармала.

И. Риманов.

Выставкăра

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставки уçăласси икĕ уйăх та йулмарĕ ентĕ. Павильонсем, залсем пурте хатĕр. Макетсемпе черчĕжсем те пурнăçа кĕрсе çитеççĕ. Мускава пĕтĕм çĕршывран—Балти тинĕсĕнчен пуçласа Владивостока çити, Çурçĕр сырансенчен пуçласа Хура тинĕсе çитиччен,—социалисăмла аслă çĕршывăн кашни кĕтессинчен експонатсем пыраççĕ.

…Тепĕр икĕ уйăхран епĕр Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче. Нумай кĕтнĕ кун çитрĕ. Выставка алăкĕсем хăнасемшĕн уçă. Çынсем нумай, шутласа та пĕтерес çук. Çавах та, ним хĕсĕнмесĕрех епĕр йĕркелĕн Çурçĕр-Хĕвелтухăç павильонĕ умне пырса тăратпăр. Пирĕнпе пĕрле хĕвеллĕ Казахстан представителĕсем, Инçетри-Хĕвелтухăç çыннисем, Çурçĕрте пурăнакансем, украинецсем.

Павильона кĕрсен алăкран çӳлтерехре „Чувашская Автономная Советская Социалистическая Республика" тесе çута саспаллисемпе çырса хунă зал умне пырса тăратпăр. Уйрăм ушкăнсемпе, екскурсоводсем йертсе пынипе, епĕр çав зала кĕретпĕр. Мĕн куратпăр-ха кунта?

Çӳлеле пăхатăн—мачча çук пек. Ун вырăнне тырпул праçникĕн кунне кăтартакан пит пысăк фото-картинă. Çтенасем тăрăх пучахсен гирлянчĕ анат, йалтăртатса тăракан пучахсем хăй патне чĕнеççĕ, илĕртеççĕ. Урай—йуманран тунă паркетран. Ăна чăваш орнаменчĕ эпилемлетсе тунă. Аçта пăхатăн—унта залри картинăсене, експонатсене, диаграммăсене чăваш тĕрри туса илемлетнĕ. Кĕскен каласан, ку залра Чăваш республикĕн чаплă çитĕнӳвĕсем, чăваш халăхĕн телейлĕ те хаваслă пурнăçĕ курăнса тăрат. Зал варринче, çӳлĕ постамĕнт çинче, чăваш çĕршывĕн картти саралса тăрат. Ăна чи авал чăваш тĕрĕçисем пурçăнпа тĕрлесе картта çинче чăваш уйхирĕсене, пуйан вăрмансене, колхозсемпе МТС-сене, хапрăксемпе савăтсене, хуласемпе йалсене, çырмасемпе кӳлсене, чаплă çулсене палăртса тухнă. Ленинла-сталинла наци политикин йалавĕпе пырса, вырăс пролетариачĕ пулăшса пынипе чăваш халăхĕ тунă çитĕнӳсене карттă уççăн кăтартса парат.

Карттă патĕнчен пире залăн пĕр çтени патне илсе кайаççĕ. Унта чăваш тĕррисем хушшинче чăваш халăхне правительствă панă награда—Ленин орденĕ йалкăшса тăрат. Çавăнтах пирĕн умра Пĕтĕм Российри Тĕпĕçтăвкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени:

„Российри Социалисăмла Федеративлă Совет Республикĕн пĕр пайĕ пулса кĕрекен Автономлă Чăваш Облаçĕ тăвас, унăн центрĕ Шупашкар хули.

Пĕтĕм Российри Тĕпĕçтăвком председателĕ М. И. Калинин.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ—В. И. Ульйанов (Ленин).

Мускав. Кремĕл. 1920 çулхи июнĕн 24-мĕшĕ.

Унтах 1925 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче йышăннă тепĕр постановлени. Вăл автономлă облаçран чăваш халăхне автономлă республикăна куçма ирĕк пани çинчен. Унтан татах тепĕр, вăл—темиçе çул хушши йалхуçалăх ĕçĕсем йенĕне, культура тĕлĕшпе, государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе тата ытти ĕçсене лайăх туса пынăшăн Чăваш республикне Ленин орденне пама йышăннă постановлени. Пирĕн умра илемлетнĕ альбом—„Чăваш АССР Конституцийĕ". Унпа пĕрлех чăваш халăхĕ аслă Сталин патне çырнă çыру, унтах, чăваш халăхĕн çĕнтерӳне кăтартакан альбом. Диаграммăсем промышлĕннăç ӳссе пынине, культурлăх малала кайнине кăтартаççĕ. Акă, рабочи класс ӳссе пынине кăтартакан пĕр диаграммăна илер. Чăвашсене автономи панăранпа чăвашсенчен рабочисен хисепĕ 50 хут (!) ӳснĕ. Пурнăçпа йăла условийĕсем те çавăн пекех. Çĕнĕрен тунă хватерсенчен рабочи поçолăкĕсем, клубсем, ача сачĕсемпе йаçлĕсем, канмали çуртсемпе пульницăсем ӳссех пыраççĕ.

Пысăк фото-монтаж Чăваш республикĕнче социалисăмла шултăра йалхуçалăхĕ çĕнтернине кăтартат. Колхозсенче 990 пин гектар ĕмĕрлĕхе усă курма çĕр çирĕплетсе панă, хресчен хуçалăхĕсенчен 75 процент таран колхозсенче пĕрлешсе тăраççĕ, 21 МТС пин трактăрпа социалисăмла уй-хирсене ĕçлесе тăрат, 300 ытларах комбайн. Çав май чăваш йалхуçалăхĕн продукцийĕ ĕлĕкхинчен 2 хут ытла ӳсме пултарнă. Тулă акса илесси 11 хут ӳснĕ.

Çтена çинчи пĕр плакат чăваш колхозĕсенчен 50 процентне йахăн—пурĕ 800 колхозран ытла вăйлă тырпулшăн тата йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн лайăх кĕрешсе пынипе выставкăра пулма тивĕçлĕх илнине кăтартат.

Макетсем те интереслă. Акă пирĕн умра Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхоз йалĕ. Вăл пачах çĕнĕле—клублă, шкуллă, пульницăлă, йаçлелĕ йал.

Тепĕр макет—Çеверев трактăрис ĕçлени. Унăн пĕтĕм ĕçĕ курăнса тăрат.

Електричĕствă çуттипе илемлетсе тунă диаграммă республикăра халăха вĕрентес ĕç мĕнле ӳсĕм тунине кăтартат. Фото-документсемпе диаграммăсем чăваш халăхĕ ĕлĕкхи тĕттĕм те кичем пурнăçран йулнă трахомпа йепле кĕрешнине кăтартса параççĕ.

Чи варринче пит пысăк фото-картинă: малти ретре орденоносецсемпе пĕрле республикăн чи авал çыннисем—стахановецсемпе ударниксем малала та малала утса пыраççĕ.

Чăваш залĕн çак пайĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, çакна кăтартса парат: Октябĕрти Аслă революци çĕнтернипе чăваш халăхĕ, Ленинпа Сталин партийĕ йертсе пынипе тата вырăс пролетариачĕ пулăшнипе, икĕ хутлă пусмăр айĕнчен—вырăс тата чăваш буржуазийĕн пусмăрĕ айĕнчен тухса, нациле автономи илсе, социалисăм строительствинче ăнăçулăн ĕçлесе пырат.

* * *

…Епĕр выставкăн тепĕр пайĕнче. Художĕствăлă пысăк фото-картинă çинчен сирĕн çине Феньă Картузова—Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ Туçа" колхоз стахановки илемлĕн кулса пăхса тăрат. Хулпуççи çинче унăн тулли пучахлă кĕлте. Хĕвел хĕртсе пăхат. Картинă колхозла пурнăçăн телейлĕ те хаваслă ĕçне кăтартат.

Ку вăл выставкăн тĕп пайĕ, колхозсем уй-хир ĕçĕнче тунă чаплă çитĕнӳсем тунине кăтартакан пай.

Сталинла 7—8 мĕлйард пăт тырăшăн вăйлăн кĕрешсе, агротехникăла ĕçсене массăлăн пурнăçласа пырса, Чăваш республикĕнчи колхозсем иртнĕ çулта вăтам шутпа гектартан 97-шер пăт тырă туса илнĕ. Ĕçкунĕ пуçне вăтам шутпа 15-шер кĕренкĕ тĕштырă валеçнĕ. 70 колхозран ытларах гектартан 120-шер пăт, 300 колхоз таран 100 пăтран ытла тырă илнĕ.

Кунта епĕр çута тĕкĕр хăма тăнине куратпăр, унăн йĕри-тавра тĕштырă пучаххисенчен тунă гирляндăсем. Тĕкĕр çинче вăйлă тырпул маçтăрĕсен йачĕсем çуталса тăраççĕ. Акă, Патăрйел районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри стахановец Волков йачĕ. Унăн звени гектартан 70,24 центнĕр сĕлĕ илнĕ. Унпа йунашарах „Мурат" колхоз (Йĕпреç р.) звенйевойĕ—Борисов Иван. Унăн звени гектартан 225-шер пăт сĕлĕ илнĕ. Акă тата Исайĕв Иван, Атнашри Киров йачĕпе тăракан колхозран, гектартан 47,1 центнĕр кĕрхи тулă илнĕ. Унтан „Двигатель революции", „Звезда" тата ытти колхозсенчи чаплă стахановецсен йачĕсемпе ĕçĕсем.

Кунта фотоӳкерчĕксем те пур. Вĕсем агротехникăла ĕçсене мĕнле пурнăçланине кăтартаççĕ. Анлă уй-хиреем хушшинче кӳлĕсемпе пĕвесем, шывлă çырмасемпе çăлсем. Колхозсен уй-хирне шăвармаллă нӳрĕ тытма пурĕ 3 пин ытла пĕве тунă, 736 çăл алтнă.

Фото-монтаж тата çуталса тăракан диаграммăсем чăваш йалхуçалăхĕ механнзациленнĕ çирĕп никĕс çине тăнине кăтартаççĕ. Колхозсен аллинче çĕр лаптăкĕнчен 90 процентне трактăрсем сухаласа тăраççĕ, 50 процент ытларах машинăсемпе акăнат.

Механизациленнĕ йалхуçалăхра ĕçсем йепле пулса иртни Вăрнарти МТС ĕç тĕслĕхĕнчен лайăх курăнат.

Кунта тата тепĕр пит интереслă обйект пур, вăл—Кольцовкă колхоз членĕсен пурнăçне картинă çинче кăтартакан аппарат. Коробов инженерăн аппарачĕ çаврăнса тăрат, анчах çаврăнни курăнмаст. Çаврăннăçемĕн пĕр картинă хыççăн тепĕр картинă тухса тăрат. Вара, çав аппарат çине пăхса тăрса, Кольцовкă колхозĕн çулйĕрепе пурнăçне, колхоз çыннисемпе вĕсен ĕçĕсене курма пулат.

* * *

Залăн виççĕмĕш пайĕ пахча-çимĕçсемпе сат ĕçĕсене кăтартат. Кунта хăмлапа табак лартса тăвас ĕç, йĕтĕнпе кантăр акас ĕç йепле ӳссе пынине куратпăр. Акă, фотоӳкерчĕк çине пăхсан, епĕр Вăрмар районĕнчи „Майак" колхоз членĕсем гектартан 265 центнĕр çĕрулми илес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине куратпăр.

Кунтах тата Тăвай районĕнчи „Красная Чувашия" колхоз опытникĕ Т. Васильев хăй кăларнă

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Манăн тĕлпулусем

Чăвашсен Йалхуçалăх Институтĕнчи Л. А. Пеҥцих профессăрпа калаçнинчен

— Тамбоври опытлă станцире ĕçленĕ вăхăтра ĕмĕр манми И. В. Мичуринпа виçĕ хутчен тĕл пулма тўр килчĕ. Епĕ вăл тĕлпулусене нихăçан та манас çук. Вĕсем манăн асра ĕмĕрлĕхех йулчĕç.

— Пирвайхи курнăçу 1923 çулта пулчĕ. Çав çулхине çула Воронĕж хулинче прикладнайă ботаникă тăрăх малтанхи сйес пулса иртрĕ. Сйесри темиçе делегат И. Н Вавилăвпа А. Б. Келлер йертсе пынипе Иван Владимирăвич патне, ĕлĕкхи Козлов хулине, хаҥхи Мичуринскăна кайрĕç. Вĕсемпе пĕрле кайма епĕ те телейлĕ пултăм. Калас пулат, малтанхи тĕлпулу, ăслăлăхăн хашпĕр представителĕсем Иван Владимирăвичăн нумай йенлĕ ĕçĕ çине ененмесĕртерех пăхнине пулла, каштах сивĕрех иртрĕ. Йăвăç-курăксен çĕнĕ суртне тупакан асла ăстаçпа ăслăлăхăн хăшпĕр представителĕсем хушшинче темĕнле уйрăмлăх пурри палăрчĕ. Анчах ку вăл нумайа пыракан йапала пулмарĕ, мĕншĕн тесен Иван Владимирăвичăн пархатарлă ĕçĕ ененменлĕхе çамăллăнах сирсе пăрахрĕ.

— Иккĕмĕш хут епĕ Иван Владимирăвич патĕнче 1926 çулта пултăм. Ку калаçу унăн çывăх сотруднике Горшков йулташ урлă пулчĕ. Вăл мана Иван Владимирăвичпа тĕл пулса калаçма лайăх май туса пачĕ.

Ку хутра епĕ Мичуринпа нумай калаçрăм. Калаçу унăн ĕçĕ тавра пычĕ. Вăл калаçура Иван Владимирăвичăн анла ăсталăхĕ, етемлĕхĕн çутçанталăка улăштарма вăй, пуррине ĕнении курăнчĕ. „Çутçанталăка улăштарма кирлĕ. Епĕр мар ăна пăхăнмала пултăр, вăл хăй пире пăхăнтăр", — терĕ вăл темиçе хут. Пирĕн калаçу кантăрти йăвăç-курăксене çурçĕрелле куçарасси çинчен пынă чухне. Мичурин пире хăйĕн ăсĕпе тата хăй аллипе лартса ўстернĕ паха сачĕсем тăрăх илсе çўрерĕ. Кунта вăл йăвăç-курăксене стеме усаллă мĕнле улăштарасси çинчен хăйĕн йышлă примерĕсемпе паллаштарчĕ. Питĕ нумай çĕнĕ улмуççи, арбуз, дыҥă, помидор, грушă виноград тата ытти çимĕçсен сурчĕсем пулчĕç пирĕн умра. Унăн анăçлă ĕçĕсем часах тĕлĕнтерчĕç мана. Епĕ Мичуринран чылай ĕçе вĕрентĕм.

— Виççĕмĕш, йулашки курнăçу 1928 çулхине пулчĕ. Йулашки тĕлпулура Иван Владимирăвич хăйне ĕçре пулăшакан тата унăн ĕçне малала тăсакан çамрăксем çинчен питĕ хавасланса каласрĕ: „Вĕсен çине шанма пулат. Вĕсен малашлăхĕ умра. Мĕншĕн тесен хаҥхи çамрăксем ирĕклĕ саманара пурăнаççĕ. Ĕçлеме вĕсен пур условисем те пур", — терĕ.

— Кун хыççăн вăл хăйĕн ача чухнехи йăвăр кунĕсене аса илчĕ. Йăвăр пулнă унăн çамрăклăхĕ. Вăл чухăн сатăстаçи çемйинче çуралнă. Пĕчĕкренех сат ĕçне йуратнă. Ачан вĕресе тăракан вăйе тата ăсе пур чăрмав ене те ăнăçлă сирсе пынă. Çирем çула çитнĕ çĕре вăл хăйне ваҥҥи пĕчĕк сат çавăрнă, унта пикенсех ĕçле пуçланă. Анчах патша правиѓелстви çамрăк Иван Владимирăвича ĕçлеме пулăшас вырăнне, тума май çук ĕçсене хушса, чăрмантарса пынă Мичурин укçасăр аптранă, çĕнĕ суртсем кўрсе килме май пулмав. Кун пек чух вара вăл темтĕрлĕ ĕç ĕçленĕ: çĕр чавнă, сехет йусанă т. ыт. те. Çапла тăрмашса вăл Совет влаçне кĕтсе илнĕ. Кун хыççăн унăн пурнăçĕ пĕтĕмпех улшăннă Совет правиѓелстви тата аслă Ленин Мичурина тăрăшса ĕçлеме пур условисене те туса панă. Çак вăхăтран Иван Владимирăвичăн ĕçĕ анлăн саралса пыра пуçланă. Патша Российĕнче тивĕç тупман Мичурин Совет çĕршывĕнче ăслăлăхăн аслă дейатĕлĕ, хисеплĕ академик пурри те паллă çын пулса тăчĕ. Ахаҥрен мар çурални 50 çул тултарнă йатпа правиѓелствă ăна Ĕçлĕх Херлĕ Йалав орденĕ, тепĕр тăвăтă çултан Совет Сойузĕн аслă наградине — Ленин орденне панă.

— 1934 çулта Иван Владимирăвич ăслăлăхра ĕçлеме пуçлани 60 çул тултарнине чысласа иртерчĕç. Ун чухне Мичурин аслă Сталинран саламлă телеграммă илнĕ. Сталин йулташ ăна татах нумай çулсем хушши тăван çĕршывшăн ĕçлеме сывлăх суннă. Унтанпа çулталăк та çитменчĕ Иван Владимирăвича чăрсăр вилĕм пирĕн ретрен илсе тухса кайрĕ. Мичурин вилчĕ. Анчах унăн пуçарăвĕ, унăн ĕçĕ тата йачĕ Совет çĕршывĕнчи ирĕклĕ кашни гражданинăн чĕринче пурнат. Пиншер вĕренекенсемпе йалхуçалăх ăстаçисем унăн ĕçне малала туса пырĕç.

Çутçанталăка улăштаракан ученăй, академик Иван Владимирăвич Мичурин йачĕ тĕнчери културан пантеонĕ çине Дарвин, Менделеевпа Пастер йачĕсемпе йунашар кĕрсе йулчĕ.

ССР Союзĕн хулисем тăрăх

ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Абхази столицинче, Сухуми хулинче, çĕнĕрен туса пĕтерĕçен гостиницă.

Б. Фишман фото-ўкерчĕкĕ (Сойузфото).

Çитĕннисен шкулĕсене вĕренме илме пуçланă

Çитĕннисем вĕренмели вăтам шкулсене вĕренме кĕме зайавленисем илме пуçланă. Çĕнĕ вĕренў çулĕ хулари шкулсенче çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕнче, йалти шкулсенче октябĕрĕн 15-мĕшĕнче пуçланат. Вăл шкулсене мĕн пурĕ 773.400 çын илеççĕ.

Шкула кĕмели испытанине 16 çултан малалисене пур граждансене те кĕме ирĕк параççĕ. Испытанирен иртнĕ вĕренў çулĕнче çитĕннисен шкулĕнче вĕренсе тепĕр класа куçарни çинчен документ тăратнă çынсене çеç хатараççĕ. Çитĕннисен шкулĕнче шкула кĕме хатĕрленекен группăсем тата 5—10-мĕш классем пулаççĕ.

(ТАСС).

Телейлĕ пурнăçри ачасем

Анна Толбайĕва — 7 ача амăшĕ. Çакна май вăл государствăран 2 пин тенкĕ укçа илчĕ. Унăн ачисем телейле та савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ. Пўртре таса. Кунта чечексем, сехет пур, стенасем çумĕнче партипе правиѓелствă руководителĕсен сăнĕсем. Толбайĕва виçĕ тĕслĕ хаçат-журнал çырăнса илсе пулат. Унăн велосипед пур.

Хура Çырма йалĕнче (Йшлей р.) хăйсен ачисене телейлĕ пурнăçпа лайăх ўстерекенсем нумай. Нумай ачаллă амăшĕсем ачасенĕ телейлĕ пурнăç туса панăшĕн Сталин йулташа тав тăваççĕ.

Арк. Наумăв.

Колхозри драмкружок

Пушнарти (Петĕрне р.) Мичурин йачĕпе тăракан колхозри драмкружокра 30 çын. Драмкружок членĕсем кăçал пурĕ 21 спектакаҥ лартнă.

Драмкружок членĕсем постановкăсенче калаçма, выҥăма чăвашсен Петĕрнери III-мĕш колхоз театрĕнчи артисĕсенчен вĕренсех пыраççĕ, вĕсен постановкисенче пулаççĕ. Акă, Çмирнов, Мокенĕв, Волкăв, Токарĕв йулташсем рольсене суфҥорсăр выҥаççĕ.

Драмкружок членĕсем сывăхри колхозсене те туха спектакаҥсем лартаççĕ. Спектакаҥсене куракансен йышĕ пысăк.

Вакунсем йусакан саватă

Ийунĕн 4-мĕшĕнче саватă хăйĕн программине 111 процент тултарнă.

Уйрăм цехсем çапла ĕçленĕ:

— Тавар комбиначĕ. 35 мăшăр кустăрма тўрлетсе каларнă — 92 процент, линии çине 13 вакун панă 103 процент.

— Кустăрма цехĕ рессорсем тўрлетессине 60 процент тултарнă.

— Тимрĕç цехĕ пĕр кунхи плана 148 процент, йăвăç каскалакан цех — 102 процент тултарнă.

Ваҫук пичче каласа пани.

(Калав)

Çентабĕр уйăхĕн йулашки кунĕсем.

Пирĕн бригада, кулленхи пекех, ĕçе тухрĕ. Ир-ха. Савăт таврашĕнче шавлани-туни, ĕçлекенсем çуйхашни илтĕнмест. Тўлек шывлă Двина тĕлĕрнĕ пек туйăнат, вăл çутăлса выртат, ун хĕрринче купаланса выртакан пĕренесен мĕлкисем шыва ўкнĕ.

Епĕр пĕренесене йăвантарма, вагонеткăсем çине тийеме тытăнтăмăр. Ваҫук пичче пĕренесем çине, çўле хăпарса кайнă. Вăл пысăк кĕрешсене лумпа хире-хире йăвантара пуçларĕ. Анчах пĕренесем пĕччен çына парăнасшăн мар, вĕсем чĕрĕ, йăвăр. Епĕр ăна пулăшма тесе виççĕн тан чупса пытăмăр.

Епĕр тăнă çĕртен питĕ инçетри çĕрсем курăнаççĕ. Двина шывĕ ытла сарлаках та, мар.

Леш йенче — хăма çуракан сăватсем. Унта та, кунти пекех, ĕç вĕрет. Унта та, кунти пекех, пĕренесемпе хăмасем купаланса выртаççĕ. Авă, йут патшалăхран килнĕ баржă. Рабочисем ун çине хăма тийеççĕ.

Авă, пулăçăсем ишсе çўреççĕ. Авă, коми çыннисем, пăланĕсене кўлсе, хуланала кайаççĕ... Ех, кăмăллă та вĕт çак пĕрене куписем çинчен тĕнчене пăхса тăма.

Чи çўлтен хускатса йанă пĕренесем чул çине йăвана-йăвана анаççĕ. Анаççĕ те таçта питĕ айакка çитиччен кусса кайаççĕ. Вара айалта йулнă йулташсем вăл пĕренесене вагонетка çине тийесе тăраççĕ...

Çапла епĕр кантăрлаччен ĕçлерĕмĕр. Апатланассине те пĕренесем çинчех апатлантăмăр.

Епĕр пурте çамрăксем. Пирĕн хушăра чи ватти вăл — Ваҫук пичче. Вăл, хумханса йухакан Двина шывĕ çине пăхрĕ те, тарăн, питĕ тарăн шухăша путрĕ. Унăн куçĕ умне иртнĕ пурнăç мĕлкисем килсе тăчĕç.

Авă, Двина шывĕ хĕрринче пĕчĕкçĕç пўрт. Унта ĕлĕк Зорин йатлă, хура, çĕмĕрт пек хура çўçлĕ, питĕ чипер çамрăк рабочи пурăнатчĕ. Вăл çак савăтрах ĕçлетчĕ. Кашни кăç бараксене пырса рабочисене тĕрлĕ çитменлĕхсем çинчен калатчĕ. Пуйансем ĕçхалăхне йепле пусмăрлани çинчен каласа ăнлантаратчĕ. Халĕ те лайăх астăватăп: вăл мĕнле майпа кĕрешў çулĕ ăнăçлă пулассине каласа ăнлантарат.. Унăн хĕрў сăмахĕсене мĕн пур рабочи итлет. Ĕçлемесĕр ыркуракансене çиленеççĕ. Пурте, пурте ĕçлеме тивĕçлĕ...

Унăн сăмахĕсене пур рабочи те итленĕ. Вĕсем ăна пурте пĕтĕм чĕререн йуратнă. Зорин — пирĕн чи çывăх тусăмăр, теççĕ. Унщăн чунĕсене пама хатĕр тăраççĕ.

Акă, Зорина айăпласа арĕслерĕç. Аллисене хыçалала çавăрса çыхрĕç. Хĕп-хĕрлĕ йуна ўкериччен хĕнерĕç. Ку ирсĕр ĕç çинчен саватри рабочисем пĕри те сисмен. Вĕсем: Зорин йулташ мĕншĕн ĕçе тухмаст-ха, — ăçта кайса сухалчĕши?" — тесе пĕринчен-пĕри ыйтатчĕç. Нумай та вăхăт иртмест, Зорина сут турĕç. Ăна революцилĕ кĕрешĕве хутшăннăшăн персе вĕлермеле тăваççĕ...

Хĕвел хĕрелсе вăрман хыçне пытанчĕ. Тĕттĕм кăç хăйĕн тексĕм хура чаршавне карнăçем карат. Зорина тĕрмерен илсе тухаççĕ те, ав, çавăнта, Двина çыранĕн хĕррине персе пăрахма пырса тăратаççĕ. Выçăпа асаплантарнăран унăн питçăмартийĕсем путса кĕнĕ. Илемлĕ куç çутийĕ пĕтнĕ. Зорин çапах та перекенсем çине тинкерсе пăхрĕ те:

— Есĕр мана перетĕр. Перĕр! Анчах астăвăр, епĕ хамăн ĕçĕмшĕн укĕнместĕп. Епĕ вăхăтсăр вилетĕп. Анчах епĕ ку вилĕмрен хăрамастăп. Ан манăр! Пирĕн ĕç сухалас çук. Вăрлăх акăннă. Пирĕн йунран паттăр, вăйлă революционерсем çитĕнĕç. Вĕсем пирĕн тăкăннă йуна манмĕç. Архангелҥск таврашĕнче, акă çак Двина çыранĕн хĕрринче, хисепсĕр тăкăннă йуна сиртен кайала таврса илĕçех. Пирĕн революци çути — çывăх... Епĕ вилетĕп... Еп вилеп! Харушă мар!.. Епĕ болҥшевикшăн тивĕç ĕçĕмсене пурнăçа кĕртрĕм, — терĕ.

Малтан Зоринăн куçĕсене çыхрĕç. Печĕç. Вара Двина шывне пăрахрĕç. Двина шывĕ çине хĕп-хĕрлĕ йун саралчĕ. Саралчĕ те хумпа пĕрле малала йухса кайрĕ...

Ваҫук пиччен шухăшĕсем çавра çил пек çавранчĕç. Вăл, çав мĕлкесене куç умне кўрсен, шăлĕсене качăртаттарса илчĕ. Паллах, çав ирсĕр кунсене пĕр Ваҫук пичче çеç мар, нумайĕш, вăл вăхăтра хăйсен куçĕсемпе курса йулнă ватă рабочисем те час-часах аса илеççĕ. Час-часах çамрăк рабочисене кала-кала параççĕ.

Михаил Беров.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç (Каталони) фрончĕн çурçĕр участкинче республика çарĕсем ийунĕн 3-мĕшĕнче чылай позицисем йышăннă. Çав позицисене вăрçса туртса илнĕ чухне палхавçăсен 40 çын вилнĕ.

Леванта районĕнче, ийунĕн 5-мĕшĕнче пĕр кун кунĕйех палхавçăсем республика çарĕсен позицисем çине атакаласа тăнă, анчах вĕсен нимĕнле çитĕнў те пулайман. Республикăн зенитла батарейĕсем çав районта фашиссен икĕ самолҥотне персе антарнă.

Центăрти фронтра, Тахо йуханшывĕнчен кантăрала республиканĕцсем ăнăçлăн малала кусса пыраççĕ, вĕсем Каса Де Торрекаҥҥинҥа патне çитсе тухнă. Палхавçăсене 46 çынна тыткăна илнĕ.

Ийунĕн 5-мĕшĕнче Итали 4 самолҥочĕ Валенçи çине бомбăсем пăрахма хăтланнă, анчах та республикăн зенитла артиллерийĕ вĕсене хăваласа йанă. Ийунĕн 4-мĕшĕнче фашиссен авиацийĕ Барçелона çине тапăнсан, республиканцăсем вĕсен икĕ самолҥотне персе антарнă.

Италипе Германи интервенчĕсем халҥхи вăхăтра Сагунтопа Валҥенçине тытса илме тăрăшаççĕ. Çак шутпа вĕсем хĕвелтухăç фронтне палхавçăсен çĕнĕ подкреплениĕсене илсе пынă.

Хĕвелтухăç фронтĕнче интервентсем самолҥотсем питĕ нумай илсе пырса тултарнă. Нумайах пулмаст, Леванта районĕнче, пĕр кун хушшинче кăна, республиканĕцсен позицисем çине тапăннă çĕрте Германипе Итали самолҥочĕсем пурĕ 350 пулнă.

Выставкăра

(Йулашки)

арбуз тата дыҥă сурчĕсене куратпăр. Çтенасем çине пăхсан, республикă чечекленсекен, сатлă республика пулса пыни курăнат. Республикăра пурĕ 8.680 гектар сат пур. 1913 çулхипе танлаштарсан, ўсĕм 3 хут ытла.

Залăн виççĕмĕш пайĕнчен епĕр тăваттăмĕш — йулашки пайне куçатпăр. Кунта социалисăмла выҥăхчĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тунă çитĕнўсене кăтартаççĕ. Пирĕн умра фото-монтаж. Ĕнесем, пăрусем вĕçĕ-хĕррисĕр çўреççĕ сарлака улăхра. 1913 çулта вĕсен хисепĕ 146,2 пин пуç пулнă пулсан, хаҥ 248,8 пин. Савăнпа пĕрлĕх сĕт тухăçĕ 400—500 литăртан 1506 литăр таран ўснине куратпăр. Йетĕрне районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозăн ĕне фермипчи ĕçĕсене кунта епĕр пĕтĕмпех куратпăр. Сăнав станцинчи „Песня" тата „Красотка" ĕнесем çине пăхса илетпĕр. Вĕсем хĕрлĕ горбат арăтран. „Песня" çулталăкра 5255 литăр, „Красотка" 4857 литр сĕт, парат.

Тепĕр пысăк фото-монтаж пире Стрелейкăри лаша фермин мĕнле ĕçлени çинчен ăнлантарса парат. „Успевай", „Арзгва", „Катавассия" тата „Бронзовая" йатлă лашаçем çинчен республикă тулашĕнче те пĕлеççĕ. Ипподромсенче пулса вĕсем хăйсен паха йенĕсене кăтартса, нумайĕнне тĕлĕнтерне.

Кунтах тата епĕр сурăхсемпе сыснасем ĕрчетес ĕçри çитĕнўсене, фермăри стаханăвецсене куратпăр.

Çуллахи хĕвел пĕçертсе пăхат. Кивĕ çăкасем, хăйсен чечекĕсен шăршипе сĕрĕмленсе, ĕнтĕркенчĕк лараççĕ. Ним шав тавраш çук. Пылхурчăсем çеç ыванма пĕлмесĕр вĕçеççĕ, шавлаççĕ, вĕсем çине вĕсен „начаҥникĕ" Воронцов йулташ пăхса тăрат. Кусем унăн „стахановла" ĕçлекен ҫысем. Иртнĕ çулта çав вĕллесенчен 120-шер килограм(!) пыл йухтарса илнĕ. Воронцов йултăш ĕçлекен Йепреç районĕнчи Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз утарĕнче иртнĕ çулта вăтам шутпа кашни вĕллерен 51,7-шер килограм пыл, 1,25-шер килограм ăвăс илнĕ. Утарта 132 вĕлле.

Чăваш республикинче 1967 утар, вĕсенче пурĕ 36.799 вĕлле.

* * *

...Залра епĕр чылай вăхăт иртертĕмĕр. Анчах татах курас килет. Пĕрте тухас килмест. Алла кăмăла кайакан кĕнеке лексен тепĕр хут, виççĕмĕш хут вулас килет. Выставкăна лексен те çавăн пек. Татах тепĕр хут пăхас килет, тĕл пулнă йулташсене тĕплĕн каласа памалăх ăнланса илес килет. Анчах та выставкăра епĕр çеç мар, пирĕн пек курма пынисем нумай. Вĕсем те курасшăн, вĕсем те хăйсен чĕретне кĕтсе илесшĕн.

Выставкă пире татах лайăхрах ĕçлеме опыт парат. Çав шухăшсемпе епĕр йунашарти зала, хамăр кўршĕри тăван республикăн — Мари республикĕн залне кĕретпĕр. Кунта тата ытти республикăсен залĕнче мĕн курнине вулакансене хăй вăхăтĕнче пĕлтерĕпĕр.

М. Казаков.

СУККĂРСЕНЕ ВĔРЕНТМЕЛИ

Улатăрти туллимар вăтам шкул

ВĔРЕНЕКЕНСЕНЕ ЙЫШĂНАТ

Шкула Чăваш республикĕнче пурăнакан суккăр ачасене 8 çулхисенчен пуçласа 11 çулхисем таран йышăнаççĕ. Туллимар вăтам шкул программи тăрăх вĕреннисĕр пуçне ачасене тата ытти ĕçсене, музыкăна вĕрентеççĕ.

Вĕренме йышăннă ачасене тăрантараççĕ, тумлантараççĕ общежитиенче усраççĕ тата ыт. йенчен те пулăшаççĕ. Вĕренме кĕме çак документсем кирлĕ:

Зайавлени, миçе çулхине кăтартакан справкă (метрикă хучĕ) сывлăх пирки тата куç мĕнле курнине йе пачах курманнине кăтартакан тухтăртан илнĕ справкă.

10 процентран ытларах куракансене суккăрсен шкулне йышăнмаççĕ.

Зайавленисене документсемпе пĕрле çак адрĕспе йамала:

гор. Алатырь, Чуварлейский бор, Республиканская школа слепых.

Зайавленисене ийунĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа августăн 25-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Заҥятисем 1938 çулхи çĕнтабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

3—3 ДИРЕКЦИ.

РСФСР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн

СЕНТЕРВĂРРИНЧИ

ÇĔРЙĔРКЕЛЎПЕ МЕЛИОРАЦИ ТЕХНИКУМĔ

Гидротехничĕски тата çĕрйĕркелў уйрăмĕсен I-мĕш курсне студентсене илет

ГИДРОТЕХНИЧЕСКИ уйрăм çаксене вĕрентсе хатĕрлет: гидротехникăла строительствăсенче ĕçлекен техниксене, шывлă-шурлăхлă вырăнсене типĕтес, шăварас тата искуственнăй майпа çăмăр çутарас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене. Социалисăмлă йалхуçалăхне ваҥҥи шыв пăрки (водопровод) хывас тĕлĕшпе ĕçлекен техниксене.

Çĕрйĕркелў уйрăмĕ вĕрентсе хатĕрлет: геодезилĕ ĕççене лайăх пĕлекен, МТС-сен, совхозсен тата колхозсен çĕр участкисене палăртса пама пĕлекен тата пусуçавăрнăш пройектне тума пĕлекен çĕрйĕркелекенсене.

Вĕренмели срук 4 çул. 15 çулхисенчен пуçласа 30 çулхисем таран, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Испытанисем августăн 19-мĕшĕнчен пуçласа 28-мĕшĕччен çак предметсемпе пулаççĕ: 1) вырăс чĕлхи тата литературă, 2) математикă, 3) географи, 4) физикă, 5) ССР Сойузĕн Конституцийĕ.

1938 çулта туллимар вăтам шкулсенчен çўлте кăтартнă предметсемпе отличнă вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Зайавленисене çак адрĕспе йамала:

г. Марпосад. ЧАССР, Техникум землеустройства и мелиорации.

Пĕрле çак документсем кирлĕ: а) туллимар вăтам шкул пĕтерни çинчен свидетĕлствă (подлинник), б) сывлăх пирки справкă, в) хăш çулта çуралнине кăтартакан справкă, г) икĕ фотокартăчкă (çарапуçăн ўкерттерсе, кашнин çине алпусса пĕр-пĕр учреждениро çирĕплеттермеле), д) çар тивĕçлĕхне кăтартакан документ.

Вĕренме илнисене пурне те стипенди параççĕ тата общежити пулат.

3—3 ДИРЕКЦИ.

Хваттерсем кирлĕ

хак килĕшў тăрăх

Çак адрĕспе пĕлтермеле: улица Карла Маркса, 32а, Сойузкинохроника. Телефон № 8—12.

3—3

Чăвашпромсойуза

аслă бухгалтĕрсем 2

бухгалтĕрсем 2

кирлĕ

Адрĕс: Театральная 3, Чувашпромсоюз, отдел кадров. Телефон № 0—19.

2—2

СТЕНОГРАФИПЕ МАШИНĂПА

çырма вĕрентекен курссем вĕренме илесси çинчен

пĕлтереççĕ

вĕренмели срук 10 уйăх

Курсра стенографисткă-машинисткă — ĕçтăвакан-çекретарсене вĕрентсе хатĕрлеççĕ.

Зайавленисене августăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Испытанисем августăн 20-мĕшĕнчен 25-мĕшĕччен пулаççĕ. Заҥятисем çентабĕрĕн 1-мĕшĕнче пуçланаççĕ. Вĕренме кĕрекенсене вырăс чĕлхипе тата политграмăтăпа испытани тăваççĕ. Вăтам шкултан вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ.

Зайавленипе пĕрле çак документсем кирлĕ:
Малтан вĕренни çинчен справкă,
2 фотокартăчкă,
Автобиографи,
Паспăрта перле илсе пыраççĕ. Ĕçленĕ вырăнтан характеристикă.

Вĕрентнĕшĕн укçа илеççĕ.

Заҥятисем производствăран уйăрлмасăр пулаççĕ. Каçхине вĕрентеççĕ.

Адрĕс: г. Чебоксары, ул. Чернышевская 3, Центральная библиотека. тел. № 4—05.

Курсы стенографии и машинописи.

2—2

Пайан театрсенче клубсенче. сатсенче:

Пайан кино-театрта	Саслă,' кино-фильм „На Дальнем Востоке"

Чăвашсен Государствă Филармонийĕ

Чăвашсен Государствă Академи Театрĕнче Украинăн музыкăлă драмипе комедийĕсен спектаклĕсем пулаççĕ.

ИЙУНĔН 8-мĕшĕнче

Автăрĕ Котляровский

„НАТАЛКА-ПОЛТАВКА"

3 пайлă музыкăлă комеди

ИЙУНĔН 9-МĔШĔНЧЕ

Автăрĕ (Гоголь произв. тăрăх) Старицкий.

„ВИЙ"

4 пайлă комеди—фейери.

„СПОТАРА"

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ

кантурĕ

колхозниксенчен тата уйрăм кустарсенчен

Чăпта сутăн илет,

çавнăшкалах хăйне ваҥҥи 53×80 сантиметр виçелĕ чăпта çапса памала условисемпе

курăс-мунчала парат.

Тĕплĕнрех пĕлес пулсан çак адрĕспе ыйтмала: г. Чебоксары, Красноармейская, № 5.

2—2

„СПОТАРА"

Чăваш республикĕнчи кантурĕ

Вăрман хатĕрлев ĕçĕнче йалан ĕçлеме тата çакнăшкал специаҥнăçсемпе ĕçлеме рабочисене йышăнат:

Вутă турттаракансем (кантур лашисемпе),
Йăвăç касакансем,
Станочниксем (станоклă çавра пăчăксемпе ĕçлеме),
Прийомщиксем,
Рабочисем (тĕрлĕрен ĕçсенче ĕçлеме),

Çак адрĕспе пымалла: гор. Чебоксары, Красноармейская, № 5 Контора „Спотара"

2—2

Уполномоченный Чувашглавлита № 283

13

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтрест. Заказ № 500.